Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 8 КĔÇНЕРНИКУН 207 (5021) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухаŧ. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — [illegible], ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—6—55, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен ап-пайĕн—6—53, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленум решенисене вĕçне çитиччен пурнăçлассишĕн

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисем коммуниссене партирен кăларнă чухне тунă йанăшсене тӳрлетес тата маскăпа витĕнсе йулнă тăшмансене малашне те тăрă шыв çине кăларса, вĕсене пĕтĕмпех пĕтермеле тăвас ĕçре партин пур организацисемшĕн те ĕç программи вырăнне пулса тăчĕç.

Чăваш парторганизаци ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕ. Тăшмансен— фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсен, двурушниксен, карйериссен, перестраховщиксен провокацине пула партирен кăларса йанă темиçе вуншар тӳрĕ коммуниссене, парторганизацисем тунă йанăшсене тӳрлетсе, тепĕр хут кайала парти ретне илнĕ. Акă парторганизацисен йанăшсене тӳрлетес тĕлĕшпе ПСК(б)П Обкомĕпе ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контрољ Комиççин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ çумĕнчи партколлеги туса иртернĕ пысăк ĕçсене кăтартакан цифăрсем: ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕччен партирен кăларнисем ПСК(б)П Обкомне 37 апељљаци панă пулнă. Йанварти пленум хыççăнхи вăхăтран пуçласа çентăбĕрĕн 1-мĕшне çитиччен ПСК(б)П Обкомне 99 апељљаци пынă. Вĕсенчен Обком 82 ĕç пăхса тухса, 27 коммуниста партире хăвармала тунă, иккĕшне сочувствуйушчине куçарнă. Пăхса тухмасăр 8 апељљаци йулнă, вĕсенчен 6-шĕ—ийулĕн 15-мĕш хыççăн пынă.

Партколлегире йанварĕн 20-мĕшне пăхса тухмасăр йулнă апељљацисем 31 пулнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ хыççăн тата 164 апељљаци пынă. Çак апељљацисенчен çентăбĕрĕн 1-мĕшне 112 апељљаци пăхса тухнă. Пăхса тухнисенчен 49 çынна партире хăвармала, 14 çынна—парти кандидатне, 2 çынна—сочувствуйушчине куçармала тунă. Кунсăр пуçне тата Партколлеги вырăнта пăхса тухма райкомсене 16 ĕç, ытти организацисене 34 ĕç панă, 15 ĕç архива йамала тунă. Çапла вара, Партколлеги йенĕпе пăхса тухмасăр йулнă ĕçсем пĕтĕмпе 18, вĕсенчен 9-шĕ—ийулĕн 15-мĕшĕ хыççăн пынă.

ПСК(б)П райкомĕсемпе Шупашкар хула комитечĕ 52 çынна партире хăвармала тунă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ апељљацисене пăхса тухмали сруксем пирки кăтартса панисене тĕрĕс пурнăçласа, пур апељљацисене те вăхăтра пăхса тухмала.

Чылай парторганизацисем çаплах ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенийĕсене пурнăçа большевикла кĕртсе пыраймаççĕ, хăйсем тунă йанăшсене вĕçне çитиччен тӳрлетмеççĕ, партин политикăлă-массăлă ĕçĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ хушнă пек çĕнетсе пымаççĕ. Парторганизацисем парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕчченхи вăхăтра тунă йанăшсене халĕ те çаплах туса пыни çинчен калакан фактсем те сахал мар. Ун çинчен пайан «Чăваш Коммунĕнче» пичетленсе тухакан Шишкин йулташ статйинче лайăх кăтартса панă. Çавăн пек, 1938 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче ПСК(б)П Улатăр райкомĕ Улатăр станцийĕнче аслă кондуктăр пулса ĕçлекен Гаљкин йулташа морал тĕлĕшĕнчен пасăлнă, коммунис сансăпатне çухатнă, халăх тăшманне пулăшакан çын тесе партирен кăлармала тунă. ПСК(б)П Обкомĕ çак ĕçе пăхса тухнă чухне акă мĕн палăрнă. Гаљкин йулташ стахановĕц, ăна темиçе хутчен те премиленĕ, лайăх ĕçленĕшĕн чукунçул рабочисен значокĕпе парнеленĕ. Парти Обкомĕ Улатăр райкомĕ Гаљкин йулташа партирен кăлармала тунă сăлтавсене вырăнсăр тесе шутларĕ, Гаљкин йулташа партирех хăвармала турĕ.

Партколлеги ПСК(б)П райкомĕсем 1938 çулта, ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ хыççăн, партирен кăларнă йулташсенне 20 апељљаци пăхса тухрĕ, вĕсенчен 10-шне, партирен тĕрĕс мар кăларнă тесе, партире хăвармала турĕ. Çаксем пурте вĕсем уйрăм партработниксем парти членĕсен кунçулĕ çине чунсăр-бӳрократла пăхни çинчен калаççĕ. Çавнашкал «руководитĕлсем» коммуниста айăплакан материалсене пур йенчен те тĕплĕн пăхса тĕрĕслесе тухас вырăнне, мĕнле те пулса коммунисран хăвăртрах хăтăлма тăрăшаççĕ. Коммунисăн кунçулĕ çинчен тăракан ыйту çине çавăн пек чунсăр-бӳрократла пăхас йĕркене татăклăн пĕтермеле.

Пирĕн парторганизацинче партире хăвармала тунă йулташсенчен çентăбĕрĕн 1-мĕшне парти билечĕсем илеймесĕр йулнисем 12 çын пулнă. Парти документчĕсене вăхăтра парас ĕç уйрăмах Турханпа Сĕнтĕрвăрри парторганизацисенче чăсăлса пыраŧ. Партире хăвармала тунисене парти документчĕсем парас ĕçри волокитăна халех пĕтермеле. Партире хăвармала тунă коммуниссем çине урлăн пăхни пулмала мар.

Уйрăм парторганизацисенче ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ партирен кăларнисене ĕç парас пирки кăтартса панисене пурнăçа кĕртмесĕр тăни çинчен калакан фактсем пур. ПСК(б)П Обкомĕ ку ыйту пирки йатарласа решени йышăнчĕ. Обком хăйĕн решенинче Патăрйел, Канаш, Йетĕрне райкомĕсемпе Шупашкар хула комитетне—Тĕпкомăн йанварти пленумĕн решенийĕ тăрăх партирен кăларнисене ĕçе вырнаçтарма п у л ă ш м а н н и—парти йенчен хытă айăпламала тăвасси патне çитерсе тăратма пултараŧ, тесе асăрхаттарчĕ. Пур парторганизацисен те партирен кăларнă йулташсене ĕç тупма пулăшас пулаŧ.

Партирен кăларнă чухне тунă йанăшсене большевикла тӳрлетсе пынипе пĕрлех, парторганизацисемпе хаçат редакцисен чăн-чăн провокатăрсене, елекçĕсене, маскă тăхăнса йулнă тăшмансене тăрă шыв çине кăларса пымала. Тӳрех каламала, провокатăрсемпе елекçĕсем чылай чухне пытанса йулаççĕ. Акă Чăваш Тĕпĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче Стекољщикăв йулташа «елекçĕ» вырăнне шутласа «тăрă шыв» çине «кăларнă». Вăл, Стекољщикăв йулташ, куратри авă, Л. С. Спасăва критиклеме хăйнă. ПСК(б)П хула комитечĕ Стекољщикăв йулташа партирен кăларат̆. Кайран мĕн курăнчĕ-ха? Стекољщикăв йулташ елекçĕ пулман, вăл политикă йенчен шанăçсăр Спасăв çинчен ыйту лартма тăни тĕрĕс пулнă. Халĕ Стекољщикăв йулташа партире хăвармала тунă. Чăваш Тĕпĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци Стекољщикăв йулташ тапратакан ыйту çине тĕтлĕн, тимлĕн пăхна пулсан, Спасăв буржуалă националиссемпе çыхланса кайнине тахçанах тăрă шыв çине кăларнă пулĕччĕ. Пуçламĕш парторганизаци çакăн пек туман. Çавăншăн, чăн малтан, партком çекретарне Т. В. Васиљйева ответ тытармала, мĕншĕн тесен вăл Стекољщикăв йулташ çинчен елеклес тĕлĕшпе тата чăнлипе тăрă шыв çине кăлармалли çынсене хӳтлес тĕлĕшпе сахал мар тăрăшнă.

Парторганизацисен задачĕ вăл—парти массине хамăрăн туссене тăшмансенчен уйăрса илме, халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă националиссене хирĕç хайăррăн кĕрешме, тӳрĕ, пĕтĕмпех Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн тăракан çынсен кунçулĕ çине тимлĕн пăхма вĕрентесси пулаŧ.

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери кунне Шупашкарта уйавлани

Хĕрлĕ площĕтри митинг

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери XXIV-мĕш кунне чысласа, çентăбĕрĕн 6-мĕшĕнче, кăнтăрла, Шупашкарти Хĕрлĕ площĕтре пысăк митинг пулса иртрĕ.

12 сехет тĕлне Хĕрлĕ площĕте демонстрантсем пырса тулаççĕ. Пионерсемпе шкул ачисем, призывниксем, осоавиахимăвĕцсем, физкуљтурниксем, аслă шкулсенчи студентсем, çамрăк рабочисем, комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксем колоннăн-колоннăн трибунă умне вырнаçаççĕ.

Площĕт шавлаŧ. Совет çамрăкĕсем Сталин саманинчи телейлĕ пурнăç çинчен, йуратнă тăван çĕршыв çинчен, хамăрăн пархатарлă Хĕрлĕ Çар çинчен йурлаççĕ.

Если завтра война,
Если завтра в поход—
Будь сегодня
К походу готов!

Ианраŧ çамрăксен йуратнă йурри. Хăйсем миршĕн, фашисăма хирĕç, вăрçа хирĕç кĕрешме кирек хăш самантра та хатĕр тăнине демонстрацилесе пама урама тухнă совет çамрăкĕсем:

Мы мирные люди,
Но наш бронепоезд
Стоит на запасном пути—

тесе мăнаçлăн йурлаççĕ.

Çанталăкĕ пĕрре те çентăбĕр уйăхĕнчи пек мар. Тăптăр тӳперен çу хĕвелĕ пĕçертет. Сывлăшри температурă 30 градусран иртет. Йĕри таврах тӳлек. Физкуљтурниксем уйава труçиксемпе майкăсем вĕççĕнех тухнă. Вĕçĕ-хĕррисĕр хĕрлĕ йалавсем, çулпуççен портречĕсем, плакатсем. Сталин йулташ портречĕсене чĕрĕ чечек йараписемпе капăрлантарнă. Кашни колоннă хăйне лайăхрах та пахарах илемлетме тăрăшнă.

Сехет йĕппи 12 сехет те 40 минут çине çитет. Трибунă çине Чăваш правителствин членĕсем, парти Обкомĕн, ПСÇЛКС Обкомĕн руководителĕсем, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсем хăпараççĕ. Комсомол хула комитет çекретарĕ Моисейĕвă йулташ Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери XXIV-мĕш кунĕ йачĕпе пухăннă митинга уçаŧ. Оркестр «Интернационал» выљаŧ.

Митинга пухăннă çамрăксене тата пĕтĕм ĕççыннисене Чăваш правителствипе парти Обкомĕн йачĕпе саламласа, ПСК(б)П Обком çекретарĕ Павлăв йулташ пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕсем çинчен, ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕ çинчен, вăл телейлĕ те хавасла пурнăçа совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çĕнсе илни çинчен калаŧ. Оратăр тĕнчери лару-тăру нихçанхи пек те мар сивĕчленсе çитнине аса илтерет. Фашисла агрессăрсем Испанипе Китай халăхне пăвса вĕлерес шутпа йунлă вăрçă пуçарса йачĕç. Вĕсем, фашиссем, Совет Сойузĕ çине—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕ çине—вăрçăпа тапăнса килме урса кайсах хатĕрленеççĕ.

Павлăв йулташ пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Фронт Хасан кӳлли районĕнче Йапони самурайĕсене аркатса тăкмалах çирĕп отпор пани çинчен каласан, митинга пухăннă пĕтĕм халăх шавлăн алă çупса саламлаŧ.

Оратăр хамăр тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетме чĕнет.

— Сывă пултăр Совет Сойузĕнчи халăхсен тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕ— Сталин йулташ!—тесе пĕтерет вăл хăйĕн самахне.

Çулпуçне Сталин йулташа чысласа митинг тăвăллăн алă çупаŧ, «урра» кăшкăрса саламлаŧ, музыкă пĕтĕм тĕнчери пролетарисен гимнне—«Интернационал» кĕввине выљаŧ.

Унтан ПСÇЛКС Обком çекретарĕ Никифăрăв йулташ сăмах тухса калаŧ. Вăл Совет çамрăкĕсем Сталинла Конституци паракан аслă правасемпе—ĕçлев, канăç, вĕренӳ прависемпе туллин усă курни çинчен, çав вăхăтрах капиталисăмлă çĕршывсенчи, пуринчен ытла фашисла Германири, Польшăри, Йапонири т. ыт. çамрăксен правасăрлă, çапла пурнăçĕ çинчен каласа параŧ; Испанири тата Китайри çамрăк бойецсем ирĕк пурнăçшăн фашисла пусмăрлăха хирĕç йепле паттăррăн кĕрешни çинчен калаŧ.

— Фашисăмăн троцкисла-бухаринла агĕнчĕсем совет çамрăкĕсене аслă коммунисла партирен уйăрса йарасшăн пулнă,—тет вăл.—Анчах сталинла Нарком Н. И. Иежов йертсе пыракан Совет разведки фашисла йĕрĕнчĕксен усал ĕмĕчĕсене касса татрĕ: халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Совет çамрăкĕсем, комсомол Ленин— Сталин партийĕ тавра, аслă çулпуç Сталин йулташ тавра никçанхинчен те çирĕп пĕтĕçнĕ.

Йулашкинчен хулари пионерсемпе шкул ачисен йачĕпе Тумашевă пионеркă тата тир-сăран савăтĕнчи стахановкă Скачковă йулташсем тухса саламлаççĕ.

Митинг резољуци йышăнаŧ. Резољуцире çамрăксем чи малтанхи сăмахра халăхсен çулпуçне Сталин йулташа саламлаççĕ, тăван çĕршыв умне вăрçă хăрушлăхĕ килсе тухсан пурте пĕр çын пек кар тăрса советăн таса чиккисене хӳтлеме тухма тупа тăваççĕ.

Çамрăксен парачĕ

Митинг хыççăн Хĕрлĕ площĕтре чаплă парад пуçланаŧ.

Парада знаменосĕцсен колонни пуçлаŧ. Çамрăксен колоннисем пĕрин хыççăн тепри трибунă çуммипе чаплă маршпа иртсе кайаççĕ.

Физкуљтурниксен парачĕ çав тери интереслă пулчĕ. Виçĕ пин физкуљтурник ĕçлеме тата Совет Сойузне тăшмансенчен сыхлама хатĕр тăнине кăтартса пачĕç. Ирĕклĕ спорт обшчĕствисем: «Динамо», «Спартак», «Темп», «Молния», «Колос», «Медик», «Учитель»—хăйсен колоннисене пĕри тепринчен пахарах илемлетнĕ. Акă «Спартак» колонни пуçĕнче автомашинă. Унта Сталин йулташăн пысăк портречĕ, машинă çинче çамрăк хĕрарăмсем хăйсен кăкăр ĕмекен пĕчĕк ачисене тытса ларнă. Хĕрарăмсене телейлĕ ача амăшĕ пулма савăнăçлă пурнăç туса панăшăн вĕсем Сталин йулташа ăшă сăмахсемпе тавтуса саламлаççĕ. Тепĕр грузовик çинче спартаковкăсем пирамидă туса пыраççĕ. Хыçалта кăвак тинĕс хумханаŧ: марлĕ пирĕнчен тунă шыв çийĕпе физкуљтурник байдаркăпа ишет. Байдаркине çамрăксем çĕклесе пыраççĕ.

«Динамо» колонни пуçĕнче пыракан автомашинă çинче пограничникене кăтартнă. Автомашинă çинче Сталинпа Йежов портречĕсем. Чикĕ йупи. Йăвăççем хушшинче икĕ часовой винтовкăсемпе тăраççĕ.

«Молния» колонни автомашинĕ пирĕн Тинĕс-Çăр Флотне кăтартаŧ. Машинă çинче крейсĕр. Краснофлотĕц тинĕс чиккисен хуралĕнче тăраŧ.

Акă «Колос» колонни пуçĕнче сăнчăрлă трактăр комбайн кăкарса пыраŧ. Хыçалта кĕлтесем йатнă колхозницăсем тата винтовкăсем тытнă пехотă, хĕрлĕ хĕреслĕ санитаркăсем. Колоннă трибунă умĕнчен иртсе кайаŧ те, сăнчăрлă трактăртан «танк» пулса тăраŧ. «Танк» башнинчен пулемет кĕпçи курăнаŧ. «Танк» трибунă тĕлне çавăрăнса пыраŧ. Пехотă «танк» хыçĕнче çапăçăва тухма хатĕрленсе тăраŧ, санитаркăсем икĕ йенче хăйсен вырăнне йышăнаççĕ. Пурте пĕр харăс: «Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунаниссенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр!»—тесе татса калаççĕ.

Вăхăт 2 сехет те 30 минут çитсен площĕтрен йулашки колоннăсем тухса кайаççĕ.

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери кунне уйавлани — çамрăк вăйхăватăн, хăйулăхăн, çамрăк сатурлăхăн хăватлă демонстрацийĕ пулчĕ.

С. Константинăв.

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери кунĕ

Çĕмĕрлере

Çĕмĕрле хулинче 3 пин çынлă митинг пулса иртнĕ. Çуллахи тумсемпе капăрланнă, партипе правителствă руководителĕсен—Сталин, Молотăв, Каганович, Йежов, Жданăв йулташсен портречĕсене йатнă демонстрантсем 12 сехет тĕлне Хĕрлĕ площĕте пухăннă. Çамрăксем—вĕренекенсем, предприйатисенчи çамрăк рабочисем, призывниксем—хавасла йурăсемпе, ташă кĕвĕсемпе, музыкăпа хĕпĕртесе савăннă. Хĕрлĕ хăмачсем çине çырнă лозунгсем—пирĕн совет çамрăкĕсем Ленинăн—Сталинăн аслă коммунисла партийĕ тата халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине палăртаççĕ, çамрăксенчен телейлĕ пурнăçа туртса илме хăтланнă троцкисла-бухаринла бандитсене пĕрре йулмиччен тăрă шыв çине кăларса пĕтерсе пыма чĕнеççĕ.

Митингра парти райком çекретарĕ Мидаков, комсомол райком çекретарĕ Шишкин, райĕçтавком председателĕ ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕ Матвейĕв, комбинатри çамрăк стахановĕц Кусайкин йулташсем тухса каланă.

Çĕмĕрле хулинчи çамрăксем тĕнче вăрçин хăрушлăхне, фашисăма хирĕç, миршĕн, коммунисăмшăн кĕрешме хатĕр тăнипе, Совет Сойузне сыхлама йаланах хатĕр пулнипе демонстрацилесе панă.

Сĕнтĕрвăрринче

Комсомол райкомĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери кунĕ çинчен доклад тума районри активран 24 докладчике колхозсенчи пуçламĕш организацисене йанă. Çентăбĕрĕн 6-мĕшĕнче хулара çамрăксен митингĕ пулнă, унта шкул ачисем, студентсем, призывниксем, физкуљтурниксем 2 пин çын ытла хутшăннă.

Митинг хыççăн çамрăксем Атăл лешйенне массовкăна кайнă. Стадион çинче «Учитĕл» спорт обшчĕствин командипе древтехникум команди футболла выљанă.

Фељдшĕрсен шкулĕнче

Çĕрпӳри фељдшĕрсен шкулĕнче 311 студент вĕренет. Вĕренӳ çулĕ пуçланнипе пĕрлех шкулта тĕрлĕрен кружоксем: хор кружокĕ, драмкружок, фото, литературă тата физкуљтурă кружокĕсем ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем планпа ĕçлеççĕ.

Комсомол организацийĕ пуçарнипе студентсем хушшинче социалисăмла ăмăрту сарса йачĕç. Кашни студент ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине отлично вĕреннипе кĕтсе илес тесе ăмăртаŧ.

К. Михайлăв.

Франко тылĕнче

Англири «Дейли Геральд» хаçат Франко генерал лагерĕнчи йăвăр лару-тăру çинчен çыраŧ. Хаљхи вăхăтра халăхсем çеç мар, пăлхавçăсен çарĕнчи чылай испанĕц-офицерсем те Франко генерал тĕлĕшпе питĕ те хирĕçле позици çине тăнă. Пăлхавçăсем часах çĕнтересси çинчен халĕ ĕнтĕ калаçмалли çук,—тесе çыраŧ «Дейли Геральд».—Граждансла халăх тата салтаксем вăрçă пĕтессине тата Италипе Германи интервенчĕсем Испани территорийĕ çинчен кайассине çав тери хытă кĕтеççĕ.

«Франко генералпа килĕшменни,—тесе çыраŧ хаçат,—питĕ те вăйлă ӳснĕ, пăлхавçăсем туртса илнĕ территори çинче Франко генерала хирĕç çывăх вăхăтра восстанисем пуласшне кĕтсе тăмала пулаŧ».

(ТАСС).

Сталинла ăрăван савăнăçлă праçникĕ

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери XXIV-мĕш кунĕ

Çентăбĕрĕн 6-мĕш умĕн малтанхи кунах пĕтĕм çĕршыв праçник тумĕпе илемленнĕ. Иртен пуçласа урамсем çамрăксемпе тулса ларнă. Мускавра демонстраци пуçланиччен чылай малтан Кремљ çумĕнчи трибунăсем çине çынсем пырса тулнă.

Кăнтăрла 12 сехет тĕлне мавзолей трибуни çине Угарăв, Димитрову, Шкирйатăв, Косарĕв, Булганин, Шверник йулташсем, Совет Сойуз Геройĕсем Папанин, Чкалăв тата Бељаков йулташсем хăпараççĕ.

Хĕрлĕ площĕте демонстрантсен пирвайхи колоннисем пырса кĕреççĕ. Çамрăк тĕреклĕ алăсем Маркс, Енгелс, Ленин, Сталин портречĕсене, партипе правителствă руководителĕсен портречĕсене çӳле çĕклесе пыраççĕ.

Çĕршер плакатсем Сталинла çамрăк ăрăван телейĕ çинчен калаççĕ, ăна ĕçлев, канăç, вĕренӳ прависем панă, вăл правасене никам та тытса илме пултараймасŧ. Иашăсемпе хĕрсем тĕнчери чи демократилĕ Конституцине тăвакана саламлаççĕ:

—Сывă пултăр тăван Сталин! Аслă Сталина урра!

Республикăлă Испанин виçĕ тĕслĕ сăрпа сăрланă йалавне çĕклесе Испани пионерĕсен отрйачĕ пыраŧ, вĕсен ашшĕсем, амăшĕсем, пиччĕшĕсемпе аккăшĕсем тĕнчери фашисăма хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ.

Ленин тата Сталин вĕрентсе ӳстернĕ совет çамрăкĕсем, ирĕклĕхшĕн никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, пĕтĕм ĕççынни етемлĕхĕн малашнехи çутă та илемлĕ пурнăçĕшĕн Хĕвеланăçĕнче тата Хĕвелтухăçĕнче фашисăма хирĕç паттăррăн кĕрешекен мĕлйуншар йашăсемпе тата хĕрсемпе пĕр шухăшлă, тăванла пулнине хĕрӳллĕн кăтартаççĕ.

Нумай плакатсене çивĕч куçлă чекиссене чысласа çырнă. Лозунгсем çамрăксене большевикла сыхăлăха ӳстерме, халăх тăшманĕсене пĕрмайах тăрă шыв çине кăларса пырса, вĕсене тĕппипех çĕмĕрсе тăкма чĕнеççĕ.

Советăн çамрăк патриочĕсем колоннăсем çийĕпе ССР Сойузĕнчи кашни гражданинăн таса тивĕçне—социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлас тивĕçне аса илтерекен çĕршер транспарантсемпе лозунгсем йатса пыраççĕ.

Демонстрантсем хушшинче призывниксем те сахал мар. Пайан вĕсем хĕçпăшал тытса, социалисăм çĕршывĕн таса çĕрне хӳтлеме хатĕр тăнине демонстрацилеççĕ.

2 сехет те 10 минутра Хĕрлĕ площĕт витĕр демонстрантсен йулашки колоннисем тухаççĕ. Демонстрацире столицăри ĕççыннисем мĕлйуна йахăн пулнă.

Ленин хулинче 18 сехетре фанфарсем демонстраци пуçланни çинчен пĕлтереççĕ. Урицкий площĕтĕнче, вăта çĕрти трибунă çинче—Жданăв, Кузнецов, Штыкăв, Соловйов, Литвин, Козыгин йулташсем, ПСÇЛКС Тĕпкомĕн çекретарĕ Богачов, Љубин, Совет Сойуз Геройĕсем Ширшов, Йудин тата ыт. те.

«Интернационал» сассипе площĕте пурте пĕр вăхăтра сакăр район отрйачĕсем пырса кĕреççĕ.

Вĕсен пуçĕнче çамрăксен учитĕлĕпе вĕсен тусĕ Сталин йулташăн чечексемпе илемлетнĕ портречĕ, Жданăв йулташ портречĕ.

Трибунă умĕпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн бойецĕсемпе командирĕсем, Осоавиахим полкĕсем, пионерсемпе шкул ачисен отрйачĕсем стройпа иртеççĕ.

Савăнăçлă та телейлĕ демонстрантсем пĕр сехет çурă хушши вĕçĕмсĕр шăваççĕ.

Совет Украинин столицинче Кийĕв хулинче демонстрацине çамрăк ачасем уçаççĕ. Йуратупа тытса пыраççĕ вĕсем пысăк транспаранта, унăн вăта пайĕнче—аслă Сталинăн портречĕ. «Ачасене телейлĕ пурнăç туса панăшăн спаçибă Сталин йулташа!»—илемлĕн йалкăшаççĕ хĕрлĕ пир çине çырнă ылтăн саспаллисем.

Ачасем хыççăн Кийĕв ĕççыннисен колоннисем пынă.

Вуншар плакатсем çапла калаççĕ:

— Троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсене каçару çук! Вăрçă чĕртекенсене каçару çук!

Ĕççыннисем илемлĕ те чаплă социалисăмлă тăван çĕршыва хӳтлеме хатĕр тăнине çирĕплетнĕ пек снайпĕрсем, лĕтчиксем, танкиссем, связиссем иртеççĕ.

Йапони агрессăрне кăтартса паракан каррикатурăна курсан, демонстрантсем уйтан хыттăн кулаççĕ.

«Вăрăмăн вăрса пуссан, йĕмне çурса пăрахатăн»,—текен халăх сăмахĕпе асăрхаттараççĕ совет çамрăкĕсем питех те мĕскĕнĕн курăнакан, хăвăтлă ССР умĕнче тăракан самурая.

Хабаровскра парад пуçланиччен малтан митинг пулса иртнĕ. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронтăн политуправленийĕн начальникĕн заместителĕ Зудăв йулташ совет патриочĕсем, Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче пулнă çамрăк бойецсен халиччен пулман паттăрлăхĕ çинчен каланă.

— Çав мухтавлă çапăçусен традицисемпе,—тесе каланă Зудăв йулташ,—пĕтĕм совет çамрăкĕсем вĕренсе ӳсмеле, пулас çапăçусенче те тăшмана ăнăçлăн аркатса тăмала.

Митинг хыççăн нумай çынлă демонстраци пулса иртнĕ. Вăл демонстраци Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕççыннисем большевиксен партине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратса тăнине, çамрăксем тăван çĕршыв чиккисене кирек хăш минутра та хӳтлеме хатĕррине татах та тепĕр хут кăтартса панă.

Владивостокра, Комсомољскра, Уфара, Тбилисинче, Ашхабадра, Сталинабадра, Алма-Атара, Йереванре, аслă совет çĕршывĕн пур кĕтесĕсенче те Совет çĕршывĕнчи çамрăксем тăван çĕршыва, Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратса тăнине, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунисăмшăн пысăк йуратупа кĕрешме хатĕррине кăтартса пачĕç.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Тутаркас парторганизацин ÿсĕмĕ

Тутаркас парторганизацинче йулашки уйăхсенче парти кандидатне 47 çын илнĕ, кандидатран члена 22 çын куçарнă.

Партине колхоз призводствинче малта пыракансем, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешекенсем кĕреççĕ.

Йулашки вăхăтра партине илнисенчен—колхоз председателĕсем 4, йалсовет председателĕсем—3, колхозниксем—7, пĕр трактăриç, пĕр шофĕр, 1 агроном, 1 коньух т. ыт. те. Вĕсем хушшинче çакăн пек паллă çынсем пур. Акă Данилăв йулташ—орденоносец, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине кайма тивĕç илнĕ кандидат. Йе тата Спаскин йулташ. Вăл МТС трактăрисĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна трактăр отрйад бригадирĕн помошникĕ туса хунă. Спаскин йулташ ĕçлекен бригадăра учотпа отчот ĕçне кăтартулă йĕркеленĕ. Çавăн пекех Йегорăв йулташа кăтартма пулаť. Вăл Тойкильт йалсовет председателĕ. Тойкильт йалсовечĕ районра пур ĕçсен тĕрĕх та малта пыраť.

Районри парторганизаци умне партине çĕнĕрен илнĕ йулташсене большевикла воспитани парас ыйту пĕтĕм пысăкĕшĕпе тухса тăчĕ. Партине илнĕ кандидатсене пурне те парти вĕренĕвне хутшăнтармала. Çакна пурнăçлас шутпа райком вĕсенчен пĕркассине—халĕ ĕçлекен парти кружокĕсене хутшăнтарчĕ, ыттисем валли çĕнĕрен кружоксем организациленĕ. Çак кружоксене йертсе пыма лайăх пропагандиссене—парти членĕсене уйăрнă.

Парти райкомĕ çĕнĕ кандидатсене марксисăм-ленинисăм вĕренĕвĕпе хĕçпăшалланма пулăшаť, çавăн пекех ку тĕлĕшпе пуçламĕш парторганизацисене конкретлă пулăшусем параť. Анчах та, калас пулаť, парткабинет çав ĕçе çаплах кирлĕ пек хутшăнайман-ха.

Пуçламĕш парторганизацисемпе парти райкомĕ партине илнĕ йулташсене парти ĕçне обшчĕствăлă ĕçе активлăн хутшăнтарса пыраççĕ.

Районри парторганизацинче 10-шар çул хушши кандидатра тăракан йулташсем пулнă (Шчеглов, Иванова). Вĕсене халĕ парти членне куçарнă. Нумай çулсем хушши кандидатра тăракан йулташсене парти райкомĕ члена куçма пулăшаť. Вĕсене ку тĕлĕшпе райком тĕрлĕ порученисем параť, политикă йенчен хатĕрленме пулăшаť. Анчах та ку ĕçе çителĕклĕ теме çук-ха.

Парти речĕсене ÿстерес тĕлĕшпе комсомол пысăк резервă. Районри комсомол организацинче пĕтĕмпе 1190 çамрăк шутланаť. Анчах вĕсенчен партине пурĕ те 31 комсомолĕца çеç илнĕ. Çакă вăл районри парторганизаци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри.

Çавăн пекех сочувствуйушчисем хушшинчи ĕç те начар тăраť. Вĕсен йышĕ те сахал, районĕпе те 42 çын анчах. Сочувствуйушчисенчен партине пурĕ 12 çын илнĕ.

Устав тăрăх, кашни пуçламĕш парторганизаци çумĕнчех сочувствуйушчисен группи пулмала. Анчах чылай пуçламĕш парторганизацисем çумĕнче ку тăрана çитсе те сочувствуйушчисен группине организацилемен.

Партине çĕнĕ членсем илес йенĕпе райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци аван ĕçлет. Çав вăхăтрах районра ку тарана çитсе те парти ретне пĕр çын та илмен организацисем те пур. Çавăн пек организацисенчен пĕри вăл—Муркашри территорилĕ пуçламĕш парторганизаци. МТС çумĕнчи пуçамĕш парторганизацинче те партине пĕр çынна анчах илнĕ. МТС директăрĕн политикă йенĕпе ĕçлекен заместителĕ Громăв йулташ комбайнерсемпе трактăриссем хушшипче начар ĕçлет.

Райком инструктăрĕсем—Иванов, Архипăв, Куссейкин йулташсем пуçламĕш парторганизацисенче пулсан та, пуринчен ытла хуçалăх ĕçĕсемпе интересленеççĕ. Парти ыйтăвĕсем вĕсен ĕçĕнче çаплах тĕп вырăна йышăнайман-ха. Инструктăр вăл—йалти парти ĕçĕнче тĕп фигурă пулмала, унăн пуринчен ытла парти ĕçĕсене тумала. Çакна ăнланса илеймен-ха пирĕн инструктăрсем.

Çак иртнĕ вăхăт хушшинче парти райкомĕ партине çĕнĕрен илнĕ йултăшсене районри ответлă вырăнсене лартас йенĕпе те чылай ĕçсем туса иртерчĕ. Çавăн пек, парти кандидатне, Угольникăв йултăша райĕçтăвком председателне суйланă. Вăл хăйне шанса панă ĕçе начарах тумасť. Парти кандидатне, Сталев йултăша райпотребсойуз председателне лартнă. Орининри „Красное Сормово" колхоз председателĕ пулнă Мойсейĕв йултăша парти членне куçарнă хыççăн, райçĕрпай пуçлăхне лартнă. „Свобода" колхоз председателĕ пулнă Йарикăв йулташ халĕ МТС директăрĕн заместителĕ пулса ĕçлет т. ыт. те. Парти райкомĕн çак йултăшсене кулленхи ĕçре те, вĕренÿре те пулăшса пырас пулаť.

Колхоз производствинче малта пыракан йултăшсене, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине ĕçре кăтартнă йултăшсене партине кĕме пулăшасси, партине çĕнĕрен илнĕ йултăшсене политикă йенчен воспитани парса пырасси—парторганизацисен пысăкран та пысăк задачĕ, çак задача пурнăçлассишĕн вĕсен çине тăрса кĕрешмеле, партипе массă хушшинчи çыхăнăва вăйлатса пымала.

В. Проворов.

Уйава хатĕрленессине вăйлатмала

Ишлей. Комсомолăн районри пуçламĕш организацисенче Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленесси сăрăлсах пыраť.

Мамăшри Буденный йачĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организаци комсомол 20 çул тултарнă йачĕпе тăван çĕршыва тивĕçлĕ парнесем пама хатĕрлессишĕн „Автогигант" колхозри комсомол организаципе ăмăртаť.

Буденный йачĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацинче оборонă значокĕсен нормине пама кружок организациленĕ. Кружокра икĕ занйати иртернĕ.

Çамрăксем хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕçе вăйлатса пынипе, колхозра тăрăшса ĕçлекен çамрăксем комсомол ретне кĕме ыйтусем параççĕ.

Чылай пуçламĕш организацисенче ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕне тата РСФСР-пе ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас умĕн ĕçленĕ комсомолец—агитатăрсем. бригадăсенче ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ ĕçĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Анчах хăшпĕр организацисенче, сăмахран, МТС çумĕнчи пуçламĕш организацинче комсомол уйавне хатĕрленме халĕ те тытăнман. Кунта кăçал комсомолĕцсемпе пĕр пуху та иртермен. Комсомол йышĕ те ÿсмест.

Гр. Шчербаков.

Илнĕ обйазателствăсене пурнăçлатпăр

Епĕр, Турхан районĕнчи Липăвкăри Ленин йачĕпе тăракан ертел тата „Липăвкă" колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацинчи комсомолĕцсем, комсомол 20 çул тултарнă тĕле пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленетпĕр.

Уйава хатĕрленнĕ май чылай комсомолĕцсем хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене тултарса параççĕ.

Ленин йачĕпе тăракан ертелĕн стружкă цехĕнче ĕçлекен комсомолĕцсем хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене тултарса параççĕ. Йегоровă Зойă ĕç нормине кунсеренех 180—200 процент тултараť. М. Степанăвă, В. Степанăвă, А. Морозăвă, К. Алексейĕв, А. Романăв, А. Зотăв йулташсем ĕç нормине 120—150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Комсомолĕцсем производствăра та, колхозра та пысăк примерсем кăтартаççĕ. Акă колхозра ĕçлекен: М. Воробйова йулташ ĕç нормине кашни кун 200—300 процент тултарса пыраť.

Хаń комсомолĕцсем пурте массă хушшинче агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ.

Ив. Архипăв.

Йетĕрне районĕнчи шкулсенче

Сарйалĕнчи туллимар вăтам шкул çентаберĕн пĕрремĕшне пур йенчен те хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ. Классенче таса, тирпейлĕ.

Çавнашкалах педагогикă училишчи те вĕренÿ çулне аван хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ. Училишчăра пурĕ 540 ача вĕренет. Вĕсем валли вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕ пĕтиччен вĕренмелĕх тетрадсем илсе хатĕрленĕ. Малтанхи кун шкула ачасем 98 процент пынă, 1-мĕш курса çĕнĕрен 140 ача илнĕ, студентсем валли столовăй хатĕр.

Анчах пур шкулсенче те ĕçсем аван пыраççĕ теме çук. Çу çапакан савăтри пуçламĕш шкул вĕренÿ çулне ытла та йапăх хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ. Шкул çурчĕ çителĕксĕр пирки икĕ çменăпа вĕренеççĕ. Иккĕмĕш çменă малтанхи кунах занйатине çур сехет кайа йулса пуçларĕ. Хăшпĕр вĕренекенсем занйатине пĕрер сехет йулса çитрĕç. Учителсем урока плансăр иртереççĕ, расписани те çук. Шкул заведуйушчийĕ Ракейĕвич йулташ хăй те урока хатĕрленмесĕр пынă.

Малтанхи кунах шкулсене пыманнисен йышĕ пысăк пулчĕ. Районри çутĕç пайĕ панă сведенисем тăрăх, çентаберĕн 1-мĕшĕнче районĕпе 453 ача шкула пыман. Кĕçĕн Хăмарккари пуçламĕш шкула (заведуйушчийĕ Гаврилăв) 26 ача, Мăн Сĕнтĕрти пуçламĕш шкула (заведуйушчийĕ Долгов) 25 ача пыман.

Йетĕрнери йалхуçалăх техникум çуртне кăçал вăйлăн йусамала пулнă. Анчах ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ укçа-тенкĕ паман. Техникумра учебниксем çителĕклĕ мар. Економилĕ географи кĕнекисем 3 çеç. Çавăн пекех нимĕç чĕлхин кĕнеки те пилĕк вĕренекене пĕрре çеç тивет. Иртнĕ çул общчежити пулнă. Кăçал ăна райĕçтăвком кайала туртса илнĕ. Халĕ ĕнтĕ техникумăн общчежити те, столовăй та çук.

Районри çутĕç пайĕ, йалсоветсем çĕнĕ шкулсем тăвассине тивĕçлипе йертсе пыман. Çавна пула чылай çĕрте шкул çурчĕсене халĕ те туса пĕтерейменççĕ-ха. Палтайри вăтам шкул çуртне тума тытăнни виççĕмĕш çула кайрĕ ĕнтĕ.

Чылай шкулсенче учителсем çитмеççĕ. Йалхуçалăх техникумĕнче чăваш чĕлхипе вĕрентекен çук. Ирçери туллимар вăтам шкулта çентаберĕн 1-мĕшĕнче занйатинче икĕ учител пулман.

Ник. Цветков.

Çĕнĕ вăтам шкул

Ку тăриччен Турхан районĕнче вăтам шкулсем иккĕ çеç пулнă. Паллах, вăл шкулсене айакри йалсенчен чылай ачасем вĕренме çÿреймен.

Çаксене шута илсе, кăçалхи вĕренÿ çулĕ тĕлне Ишлейре вăтам шкул уçрĕç. Шкул вĕренÿ çулне аван хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ. Вĕренекенсен кану вăхăтне усăлă иртерес майпа дирекци биллиард, 2 гитарă, 5 балалайкă илнĕ.

Ваç. Ибасăв.

Депутат докладне итленĕ хыççăн

КАНАШ. Çентаберĕн 2-мĕшĕнче Канашра районри актив пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура Иккĕмĕш Çессин ĕçĕсем çинчен ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Новикăв доклад туса пачĕ.

Çав куна Çессн материалĕсене ăнлантарса пама активран нумайĕшĕ района тухса кайрĕç.

Йединоличниксемпе колхозниксене Çессн йышăннă саккунсене ăнлантарса панă хыççăн, тÿрĕ пурнакан йединоличниксем колхоза кĕме пуçларĕç.

Асхвари „Хĕрлĕ хĕм" колхоза—6 хуçалăх, Катекри Кирăв йачĕпе тăракан колхоза—5 хуçалăх, Çулпуçĕнчи Крупскайа йачĕпе тăракан колхоза—13 хуçалăх, Карăклăри „Броневик" колхоза—5 хуçалăх, Уççырмари „Производител" колхоза—5 хуçалăх кĕчĕç.

П. О.

ССРС Верховнăй Советăн Иккĕмĕш Çессин ĕçĕсене вĕренеççĕ

ЕЛĔК районĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессн йышăннă саккунсене халăх хушшинче ăнлантарса парас ĕç аннăн сарăлса пыраť.

Çентаберĕн 3—4-мĕш кунĕсенче районра 20 йалсоветра совет кунĕсем туса иртернĕ. Вăл кунсенче йалсовет членĕсене, çекцисемпе депутат групписен членĕсене тата йал активне пухса, Çессн ĕçĕсем çинчен ăнлантарса панă. Ку ĕçе пурĕ 300 çын ытла хутшăнтарнă.

Çавăн пекех тата Верховнăй Советăн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен колхозниксен, йединоличниксен пухăвĕсенче тата бригадă пухăвĕсенче каласа панă. Вăл пухусенче вунпилĕк пине йахăн çын пулнă.

Çессн йышăннă саккунсене ăнлантарса парас майпа 224 çĕрте хаçат-журналсем вуласа панă, 59 çтена хаçачĕ кăларнă.

Верховнăй Советăн Çессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса пани йединоличниксем хушшинче колхоза кĕрес йухăма вăйлатрĕ. Йулашки кунсенче Елĕк районĕнче пурĕ 68 хуçалăх (209 йедокпа) колхоза кĕчĕç.

Зорин.

Хĕрлĕ Çар призывĕ

Кĕтнĕ ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ

КУСЛАВККА. Çентаберĕн 4-мĕшĕ. Ирхине тăхăр сехет çитеймен, комбинат йенчен музыкă сасси йанăраť. Музыкăпа пĕрлех „Если завтра война" йурă шăранаť. Призыва кĕрекен çамрăк рабочисемпе служăшчисем хĕрлĕ йалавсем йатса, ретĕн тăрса йĕркелĕн утса пыраççĕ.

Призывниксем призыв пунктне çитрĕç. Пĕр ушкăнĕ, комбинатри физкультурă инструктăрĕ призывник Проданăв йертсе пынипе, волейбол вылйама тытăнчĕ. Хăшпĕрисем биллиардла выляççĕ. Кунтах призывниксем валли йатарласа ларйок уснă.

Димитрий Федотăвич Чернышов комбинатра силовой станцинче машинистăн помошникĕ пулса ĕçлет. Стаханăвец. Çар ĕçне лайăх вĕренсе тухнă, оборонă значокĕсене пурне те илнĕ.

— Епĕ хам Хĕрлĕ Çара йурăхлă пулассине лайăх шанатăп. Манăн совет границине сыхлама кайас килет,—тет вăл.

Призыв комиççийĕ ĕçе тытăнчĕ. Лобайĕв стаханăвец, лайăх физкультурник комиççине чи малтан кĕрсе тухрĕ.

Призыв комиççинчен вăл савăнăçлăн кулса тухнине курсан, йулташĕсем ăна:

— Илчĕç-и, мĕнле чаçа?

— Зенитлă артиллерине илчĕç. Манăн кĕтнĕ ĕмĕт пурнăçланчĕ,—терĕ вăл хавасланса.

Çавнашкалах Лодкина та артиллерине илнĕ.

Йулашкинчен Д. Ф. Чернышов кĕрсе тухрĕ. Хĕрлĕ Çара йурăхлă пулнă.

Е. Карташов.

Канашри призывниксем

КАНАШ. Çентаберĕн 2-мĕшĕнче çар комиссариачĕ умне 1917—18 çулсенче çуралнă çамрăксем пухăнма пуçларĕç. Вĕсем пурте телейлĕ, савăнăçлă. Призыв пунктне йурласа пухăнаççĕ.

Канашри пушар командинче ĕçлекен моториссем 4 ача призыва кĕрсе тухрĕç. Вĕсем пур те хамăрăн Совет çĕршывне сыхлама кайма йурăхлă пулчĕç. Призыв пунктне кĕрсе тухнă хыççăн, моторис Слесăрĕв Григорий:

— Епĕ шутласа хунă ĕмĕт çитрĕ. Мана: „Есĕр танк çар пайне кайатăр",—тесен, манăн кăмăл пушшех те хăпарчĕ. Хамăрăн Совет границине хамăн куç шăрçине сыхланă пек сыхлатăп. Тăшмана чечекленекен Совет çĕрĕ çине ура йарса пусма нихăçан те парас çук,—терĕ.

Ал. Иванов.

Парăм нумай шутланаť

ÇĔРПУ. Районри финанс работникĕсем çителĕксĕр ĕçленине пула иртнĕ çулшăн укçа пухмали парăм нумай шутланаť. Нĕрет йалсовечĕпе илсен 1937 çулшăн пухмали йалхуçалăх налогĕ 1013 тенкĕ шутланаť. Культсбор 2460 тенкĕ пухмала.

И. Михайлăв.

В. ШИШКИН

ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи ПКК Чăваш АССР-чи уполномоченнăйĕ çумĕнчи партколлеги çекретарĕ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенийĕсене пурнăçа большевикла кĕртессишĕн

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ „Коммуниссене партирен кăларнă чухне парти организацисем тăвакан йăнăшсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцийĕсем çиве формаллă-бюрократла пăхни çинчен тата çак çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен" йышăннă решени пĕтĕм Совет Сойузĕнчи пекех, Чăваш АССР парторганизаци пурнăçĕнче те коммуниссене партирен кăларнă чухне тунă йăнăшсене тÿрлетес тата партин политикăлă ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе питех те пысăк вырăнта пулчĕ.

„Йанварти пленум решенийĕсен тĕп шухăшĕ вăл—партин пĕтĕм организацийĕсене, пĕтĕм коммуниссене вичкĕн сыхăлăхпа сисĕмлĕхе большевикла пĕтĕçтерме, партин уйрăм членĕсен кунçулĕ çине чунсăр-бюрократла пăхас йĕркене пĕтерме, партирен кăларас йе партирен кăларнисене партире хăвармала тăвас ыйтăва татса панă чухне кашни çын çине уйрăмăн пăхма вĕрентнинче пулаť („Правда").

Чăваш республикинчи парти организацисем çак иртнĕ вăхăт хушшинче малтан тунă йăнăшсене тÿрлетес йенĕпе чылай пысăк ĕçсем туса иртерчĕç. Парти райкомĕсемпе Шупашкар хула комитечĕ сахал мар хăйсен решенийĕсене тепĕр хут пăхса тухрĕç, сахал мар йултăшсене, тĕрĕс мар йышăннă решенисене улăштарса, партире хăвармала тунă.

Чăваш „республикинчи Парти Контроль Комиççин Партколлегийĕ, ПСК(б)П Обкомĕ тата ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиççин апелляци тройки çак иртнĕ вăхăт хушшинче 334 апелляци пăхса тухнă. Ку хисепрен 51 процентне, урăхла каласан, 171 çынна партире хăвармала тунă.

Çакăнта илсе кăтартнă цифăрсем, Чăваш республикĕнчи парти организацийĕсем парти речĕсене фашисăмăн троцкисла-сылтăмла тата буржуалă националисла агенчĕсенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ вăхăтрах, чылай пысăк йăнăшсем туни çинчен питех те лайăх кăтартса параççĕ. Парти организацисенчен чылайĕшĕ коммуниса партирен кăларасси çинчен тăракан ыйтăва татса панă чухне кашни çын пирки уйрăмăн пăхас вырăнне, парти членĕн кунçулĕ çине формаллă-бюрократла пăхна, ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ „Большевикла сыхăлăх вăл партирен кăларасси çинчен йе партирен кăларнисене парти членĕсен правине таврăрса парасси çинчен тăракан ыйтăва татса панă чухне тĕплĕн асăрхаса сÿтсе-йавассине тата йултăшла тăрăшассине пĕтермест çеç те мар, йăлтах урăхла, пушшех те асăрхаса тата йултăшла тăрăшса пăхассине пĕлтерет", тесе кăтартса панине манна.

Апелляцисене тĕплĕн пăхса тухни çакна кăтартаť: хăшпĕр райкомсемпе Шупашкар хула комитечĕ коммуниса айăплакан фактсене пур йенчен те тĕрĕслесе тухас вырăнне, формаллă-бюрократла пăхнă, хăйсене хăйсем сыхланас шутпа, уйрăм коммуниссем тĕлĕшĕнчен пуçламĕш парторганизацисен решенийĕсене тĕрĕслемесĕрех çирĕплетнĕ. Çавăн пирки те вара Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăракан тÿрĕ коммуниссенех партирен кăларни те сахалах пулман. Çакăн пек коммуниссене Партилĕ Контроль Комиççин Партколлегийĕпе ПСК(б)П Обкомĕ партирех хăвармала тăваççĕ.

1937 çулта Шăхасан райĕçтăвкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци райçĕрĕç пайĕн пуçлăхне, выдвижени йĕркипе лартнă Лаврентйĕв йулташа партирен кăларнă. Шăхасан райкомĕ фактсене тĕрĕслесе тухмасăрах, хăйĕн решенийĕнче çапла çырса хунă: „Халăх тăшманĕпе Николайĕвпа пурнăçра çыхăнса тăнăшăн, Лаврентйĕва ПСК(б)П ретĕнчен кăларас". Парти Контроль Комиççин апелляци тройки материалсемпе тĕплĕн паллашнă хыççăн, çакна палăртрĕ: Лаврентйĕв йулташа айăплани нихăш йенчен те тĕрĕс мар, ăна МТС директăрĕн заместителĕ Толмачов йулташ материалĕсем тăрăх нимĕн сăлтавсăр партирен кăларнă. Лаврентйĕв йулташăн пĕтĕм айăпĕ те—вăл 1937 çулти йанвар уйăхĕнче Николайĕв комсомолĕн (ВКСХШ студенчĕ) пăтĕнче хăнара пулнă чухне унăн пиччĕшĕпе, судпа айăпланнă хыççăн ирĕке тухнă Николайĕвпа тĕл пулнинче пулнă. Апелляци тройки Лаврентйĕв йулташа партирех хăвармала тунă.

Тата тепĕр паллă факт. Канашри йалхуçалăх механизаци шкулĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци 1937 çулта парторг пулса ĕçленĕ Ковальова йултăша, халăх тăшманĕпе сыхăннăшăн партирен кăларнă Йандушкин арăмĕ пулаť тесе партирен кăларнă. Ковальова йултăша партирен кăларасси те шкул директăрĕ Степанăв парти пухăвĕнче: шкулăн вĕренÿ пайĕ пуçлăхĕ пулнă Макçимăвăна НКВД органĕсем арĕсленĕ, Ковальова йулташ Макçимăвăпа çыхăну тытнă, тесе тĕрĕс мар каланипех пулнă. ПСК(б)П Канаш райкомĕ çак йăнăша тÿрлетес вырăнне, пуçламĕш парторганизацин решенине пăхса тухнă чухне хăй йенчен çĕнĕ айăп тупма тăрăшнă, Ковальова йултăша троцкиссемпе çыхăннă тесе хыттăн йатламала тунă. Парти Коллегийĕ çак фактсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Ковальова йултăша тĕрĕс мар, вырăнсăр айăпланине палăртнă. Парти Коллегийĕ ПСК(б)П Канаш райкомĕ Ковальова йултăша хытă йатламала туса йышăннă решенине пăрахăça кăларнă, ПСК(б)П райкомне Степанăв çинчен ыйтăва уйрăм пăхса тухма хушнă. Апелляци тройки Макçимăвапа Йандушкин йултăшсен ĕçĕсене пăхса тухса, вĕсене парти ретĕнче хăвармала тунă.

Халăх тăшманĕсем— троцкиссем, ес-ерсем, буржуалă националиссем Чăваш республикинчи хăшпĕр совет, хуçалăх, парти организацисенче йертсе пыракан вырăнсене йышăнса, совет влаçĕпе Чăваш республикинчи ĕçхалăхĕсен массине хирĕç пынă. Вĕсем уйрăм коммуниссен тимсĕрлĕхĕпе усă курса тăван çĕршыва вĕренекен обшчĕствăран ес-ерсене, троцкиссене, буржуалă националиссене, шургвардейцсене, шпионсене, пупсене тата мтти çавнашкал контрреволюцилĕ çĕлен-калтасене пĕрлештерсе тăракан штаб туса хунă, коммуниссен сыхăлăхне йăвашлатнă, самокритикăна хĕснĕ, аслисем умĕнче йăпăлтатма, пуç тайма вĕрентнĕ, ответлă вырăнсене хăйсене килĕшÿлĕ, пăсăлса пĕтнĕ, парти çулйĕрне тытса пыма пултарайман çынсене лартнă, вĕсем урлă халăх хуçалăхĕпе культурă строителствинче сăтăрла ĕçсем туса пынă. Парти организацисенче пĕр-пĕрне ытлашши ĕненмеле мар, ытлашши сыхланмала йĕрке туса хунă, тасаран коммуниссене ăнсăртран тунă пĕчĕк йăнăшсемшĕнех пысăк айăпа хурса айăпланă, хăш чухне тата тахçан, вун-вуник çул кайарах тунă пĕчĕк йăнăшсемшĕнех партирен кăларнă.

1937 çулта комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцинче тĕлĕнмеле провокацилĕ ĕç пулса иртнине республикăри коммуниссемпе комсомолĕцсем лайăх астăваççĕ. Унта 14 çынна политикă йенчен шанчăксăра кăларса халăх тăшманĕ „туса хунă". Шупашкар хула комитечĕпе хăшпĕр райкомсенче ларнă перестраховшчиксем комсомол конференцинче уйрăм коммуниссене вырăнсăр айăпласа пĕтернĕ фактсене тĕплĕн тĕрĕслесе тухас вырăнне, парти членĕсене ним сăлтавсăрах партирен кăларса пĕтернĕ. Çавăн пек, 1937 çулти октаберĕн 4-шĕнче ПСКП(б) Шупашкар хула комитечĕ облăçри комсомол хаçат редактăрне Иашевский йултăша, ăна комсомолăн облăçри конференцийĕнчен кăларса йанă сăлтавпа партирен кăларнă. Ку сăлтав çумне тата: икĕ питлемет, халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытаť, ĕçе йапăхтарса йанă т. ыт. çавнашкал айăпсем çырса хунă. Парти Контроль Комиççин апелляци тройки материалсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çакна палăртрĕ. Йашевский йултăшăн пĕтĕм айăпĕ те вăл хаçатра икĕ çул хушши ĕçлесе икĕ йăнăш тунинче пулнă. Халăх тăшманĕсемпе „çыхăнасси" тата çапла пулнă. 1936 çулта вăл комсомол Тĕпкомĕнчен халăх тăшманĕ пулнă Файнберг алпусса йанă хут илнĕ пулнă, ăна редактăрсен курсне пыма чĕннĕ. Йашевский йулташ курса кайман, çакăн пек чĕнÿ ПСÇЛКС обкомĕнче те пулнă пулсан та, ПСК(б)П хула комитечĕ Йашевский йултăша айăплама сăлтавсем „çителĕклĕ" тесе шутланă. Парттройкă Йашевский йултăша парти йенĕпе нимĕнле взыскани хумасăрах парти членĕнче хăвармала тунă, вăл хаçат редактăрĕ пулнă чухне 1936 çулти октаберĕн 7-мĕшĕнче тата 1937 çулти çентаберĕн 28-мĕшĕнче тунă йăнăшсем çине кăтартса панă.

ПСК(б)П Вăрмар райкомĕ Йашевский йултăша партирен кăларни çинчен пĕлнĕ хыççăн, ПСÇЛКС Вăрмар райком çекретарĕ—ПСК(б) Парти членĕ Павлăв йулташ Йашевский йултăшпа пĕр йалсем пулнине пĕлсе, нумай шухăшласа тăмасăрах Павлăв йултăша партирен кăлараť.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ 1937 çулти нойаберĕн 5-мĕшĕнче Терентйĕв йултăша, ăна комсомолăн облăçри конференцинчен кăларса йанă сăлтав тăрăх, вăл халăх тăшманĕсемпе çыхăнса ĕçлет, вĕсене хÿтĕлет тесе партирен кăларса йанă. Ĕçе тĕрĕслесен ăна айăплакан фактсем пĕри те тĕрĕс пулманни курăннă. Партколлеги Терентйĕв йултăша парти йенĕпе нимĕнле айăп хумасăрах парти членĕнче хăвармала тунă.

ПСК(б)П Канаш райком çекретарĕ пулнă халăх тăшманĕ Григорйĕв 1937 çулта ПСК(б)Парти членĕнчен Городничов йултăша—НКВД районри пайĕн работникне—теменĕскер „айăп тупса" партирен кăларнă. Ĕçе тĕрĕслеме пуçласан, Городничова айăпсем пирки мар, елекле материалсем тăрăх унăн авторитетне сухатас сăлтавпа кăларни курăннă. Парттройкă Городничов йултăша партин членĕнчех хăвармала тунă.

Кĕрхи çĕртме— вăйлă тырпул никĕсĕ

Кĕрхи çĕртме çуртрисен тухăçне ӳстерес çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăрат̆. Çакна пирĕн республикăри колхозсем темиçе çул хушши сăнаса пăхнă. Акă, Кољцовкăри (Вăрнар р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз 1936 çулта вăтам шутпа гектартан 40 центнĕр çурă çурхи тулă туса илнĕ. Кољцовкă колхозникĕсем 1936 çулхи вăйлă тырпулшăн 1935 çултах кĕрешме тытăннă. Кĕркунне тĕплĕн кĕрхи çĕртме туса хăварнă, 20 сантиметр тарăнĕш сухаланă.

1937 çулта пирĕн республикă вăйлă тырпул туса илчĕ. Паллах, кунта агротехникăлă ĕçсене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыни вăйлăн пулăшнă. Уйрăмăнах кĕрхи çĕртмене тĕплĕн туса хăварни пысăк усă панă. 1936 çулта пирĕн республикă 304 пин гектар çинче (100 процент патне) кĕрхи çĕртме тунă.

Хăшпĕр колхозсем иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса ларчĕç. Пĕлтĕр çĕртме тăвас плана 87 процент ытларах кăна тултарнă пулнă. Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе иртнĕ çулта Шăмăршă, Патăрйел, Хĕрлĕ Чутай, Канаш районĕсем начар ĕçлерĕç. Çавăнпа колхозсем кăçал начартарах тырпул туса илчĕç.

Иртнĕ çулта кĕрхи çĕртме туса хăварнă, агротехникă ĕçĕсене пĕлсе пурнăçа кĕртсе пынă колхозсем кăçал пĕлтĕрхинчен те вăйлăрах тырпул туса илчĕç. Акă, Куславкка районĕнчи Варасăр колхозĕ пĕлтĕрхинчен чылай тухăçлă тырпул туса илнĕ. Шăнчас колхозĕ кĕрхи çĕртмене тĕрĕс туса хăварнă 3 гектарлă участкăра кашни гектартан 59 шер центнĕр урпа туса илнĕ.

Кĕрхи çĕртме туса хăварни шăрăх, типĕ çанталăкра та вăйлă тырпул туса илме пулăшат̆. Çавăнпа та ĕнтĕ кĕрхи çĕртме тăвассипе пирĕн колхозсен тăрăшса ĕçлени кирлĕ. Кĕрхи çĕртмене пысăк пахалăхпа туса хăварассишĕн тăрăшас пулат̆. Кĕрхи çĕртме тунипе епĕр çĕрти нӳрлĕхе тытса тăратпăр, çĕртмене тарăн сухаланипе çумкурăксене, сийенлекен хурт-кăпшанкăсене пĕтеретпĕр. Çавнашкалах кĕрхи çĕртме тунипе çураки ĕçне çăмăллататпăр.

Пур куљтурăсемшĕн те кĕрхи çĕртмене 20—22 сантиметр, хăшпĕр уйрăм куљтурăсемшĕн тарăнрах та сухалама кирлĕ. Тарăн сухаласа çемçетнĕ çĕрте тырпулсен тымарĕсем лайăх çитĕнеççĕ, нӳрлĕх тытăнса тăрат̆, çĕре çемçетмели имçамсене çĕр айне туса хăварат̆. Çумкурăксен вăррисене сухаланă пирки айала туса хăварат̆, вĕсем тарăн пулса йулнипе çитес çулта шăтса тухаймаççĕ. Çавнашкалах сийенлекен хурт-кăпшанкăсен çăмартисем çĕр айне пулса йулнипе пĕтеççĕ.

Пахча-çимĕçсем, тымар çимĕççем тата çĕрулми лартмали, махоркă, йĕтĕн-кантăр, тĕштырăсем акмали участкăсенче çумкурăксем сарăлнă пулсан, вара кĕрхи çĕртмене 23-25 сантиметр тарăнĕш сухаламала. Кĕрхи çĕртмене тарăн сухалани тырпул тухăçне 10—20 процент таран ӳстерет.

Кантăр вăрри, махоркă, йĕтĕн акмали тата çĕрулми лартмали участкăсенче сухаламали сийе тарăнлатса сухаланă чухне органикăлă тата минераллă удобренисем— тислĕк, торф, торфофекали, фосфорит çăнăхĕ, çиљвинит т. ыт. те тăкма кирлĕ. Сухаламали сийе 5—6 йе 7—8 сантиметр таран тарăнлатса сухаланă чухне удобренисене ахаљ сухаланинчен 2 йе 2,5 хут ытларах тăкас пулат̆.

Кĕрхи çĕртмене иртерех туса хăварни аван. Пирĕн Чăваш республикĕнче кĕрхи çĕртмене çент̆аберĕн 15—20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр сухаласа пĕтермеле. Хаљ çанталăк пит лайăх тăрат̆. Уйа тислĕк тата ытти удобренисене кăларсан кĕрхи çĕртме тума тытăнмала.

Çĕртмене трактăр плугĕсемпе тата предплужниксемпе сухаламала. Кĕрхи çĕртме сухине сӳрелеме кирлĕ мар.

Йулашкинчен çакна каласа хăварас пулат̆. Кашни районăн, колхозăн кĕрхи çĕртме тăвас плана пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртмеле. Кĕрхи çĕртме—вăйлă тырпул никĕсĕ, çакна манмала мар пирĕн.

Никитин.

Нĕракине хаљ те пĕтермен

КУСЛАВККА. Тĕрлемесри „Коммунар" колхоз икĕ йала пĕрлештерсе тăрат̆. Кунта ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те çителĕклĕ. Апла пулсан та колхоз йалхуçалăх ĕçĕсемпе кайа йулса пырат̆. Сăмахран, кĕраки ĕçнех илер. Кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче акса хăвармала пулнă. Акмашкăн августăн 19-мĕшĕнче тухнă. Ĕçе тĕрĕс йĕркелемен тата ĕç планĕ çук пирки кĕрхи тырăсене хаљ те акса пĕтермен, тата 174 гектар тырă акса хăвармала.

Колхоз правленинче ĕçлекенсем:

— Пирĕн колхоз пысăк, çавăнпа кайа йулса кайрăмăр,—тесе ăнлантарма пăхаççĕ. Çакăн пек шухăшлани, паллах, тĕрĕс мар. Бригадăсенчи ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ, кĕрхи тырăсене акса хăварма тĕплĕн хатĕрленнĕ пулсан, кĕрхи тырăсене 5—6 кун хушшинчех пысăк пахалăхпа акса хăварма май пулнă. Çакна шутласа пăхман правленинче ĕçлекенсем. Çавăнпа ĕнтĕ кунта вăрлăх хатĕрлеме августăн 31-мĕшĕнче кăна тытăннă. Çак май вара кĕраки ĕçĕ те чарăнса тăнă.

Ил. Сидоркин.

Колхозсенчи расходпа приход сметисем çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ 1938 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче „колхозсенчи тупăшсене тĕрĕс мар валеçни çинчен" йышăннă постановленине колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-йавнă хыççăн, колхозниксен производствăра ĕçлес хастарлăх татах та вăйлăн хăпарчĕ. Уйрăмăнах, колхозниксене колхозри пĕтĕм тупăшран 60-70 процентĕнчен кайа мар ĕçкунĕсем тăрăх валеççе памала туни питĕ хĕпĕртеттерет.

Кăçалхи çул, иртнĕ çулхисемпе танлаштарса пăхсан, колхозсем пысăк тухăççем илеççĕ. Анчах та хăшпĕр колхозсенче правленинче ĕçлекенсем тупăшсене тĕрĕс учот туса пымав пирки тата приходпа расход сметисем çук пирки, килекен укçа-тенкĕсене кирлĕ мар çĕре салатса йараççĕ. Çавăнпа пĕрлех колхозниксене валеçес укçана та салатса йараççĕ.

Илсе пăхар ак Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Хĕрлĕ Чутай" колхоза. Ку колхоз правленийĕ хăй ирĕкĕпе укçана ăçта расходлас тенĕ, çавăнта расходласа пырат̆, унсăр пуçне колхоз правленийĕ дебиторла парăмсене шыраса илес пирки нимĕн те тумаст̆. Правленинче çакăн пек ĕçленине пула, колхозниксем: „епĕр кăçал та ĕçкунĕпе укçан илейместпĕр пулĕ", тĕççĕ.

Илсе пăхăр тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Профинтерн" колхоза. Ку колхозра ултă уйăх ĕнтĕ счетовод çуккипе учотсăр аптăраса пурăнаççĕ. Учот ĕçĕ йапăххине кура, ревизи комиççийĕ 1938 çулта пĕр ревизи те туман. Приходпа расход сметине колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетнĕ пулин те, райĕçтăвком президиумĕнче килĕшсе татăлайман, мĕншĕн тесен сметине тĕрĕс мар çырнă, сметă çырма никам та пулăшман. Унсăр пуçне колхоз председателĕ сметă тăрăх расходласа пырасси çинчен шухăшламаст̆ те.

Асăннă колхозсем район центрĕнчен инçе мар пулин те, районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем ку колхозсем çине çаврăнса пăхманни питĕ уççăн курăнат̆.

Учот ĕçне тата сметăна пăхăнмасăр ĕçлекен колхоз председателĕсем Йетĕрне районĕнче те пур. „Сура" колхозра приходпа расход сметине колхозниксен пухăвĕнче тахçанах çирĕплетсе хунă, анчах та райĕçтăвком президиумне кайма хăраса тăраççĕ, мĕншĕн тесен кунта кăçалхи тупăшран капиталовложенине 20 процентран ытла расходласа пĕтернĕ, ытти укçана та кирлĕ мар вырăнсене расходланă. Колхоз председателĕнчен: „сметăна мĕншĕн çирĕплетместĕр?" тесе ыйтсан, „кăçалхи тупăшран колхозниксене пĕр пус та валеçме пулмаст̆", тесе ответлет. Районра çакнашкал колхозсем пуррине Йетĕрнери çĕрĕç пай пуçлăхĕ Йегорăв йулташ лайăх пĕлсе тăрат̆, анчах вырăнсене кайса пулăшасси çинчен нимĕн те шухăшламаст̆.

Йетĕрнери банкра ĕçлекен колхозсен инспекторĕ Йегорăв йулташ, хăйĕн пуçарăвĕпе, колхозсенче учот ĕçĕ йапăххипе, колхозсенчи ревизи комиççи председателĕсен тата колхозри счетоводсен районри канашлăвне туса ирттерессшĕн пулнă. Ку ĕç пирки райĕçтăвком хăйĕн килĕшӳне панă пулин те, райçĕрпай пуçлăхĕ Йегорăв йулташ: „колхозсенчи учот ĕçн йусассипе Госбанк ответлă", тесе хăйĕн çинчен ответлăхне сирсе йанă.

Колхоз председателĕсене вăхăтра пулăшманни тата финанспа учот ĕçне çирĕп йыранă лартманни колхозниксене пăшăрхантарат̆. Çавăнпа та учот ĕçне йапăхтарнă колхозсем çине хаљтерех çаврăнса пăхма кирлĕ, вĕсен учот ĕçне халех йĕркелесе йамала.

Николайĕв.

Вăйлă тырпул туса илнĕ

Атапай (Тутаркас р.) йалсоветĕнчи колхозсем Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илмеле, тесе панă лозунга ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Йалсовета кĕрекен колхозсенче агротехникăн пур ĕçĕсене те тĕрĕс пăхăнса ĕçленĕ. „Хĕрлĕ йалав" колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 100 пăт, 5 гектарлă участкăра кашни гектартан 150 пăт тĕштырă туса илнĕ.

Виççĕмĕш бригадă та пысăк тырпул туса илчĕ. 5,4 гектарлă лаптăкран пурĕ 792 пăт ыраш пуçтарса илнĕ.

Колхозри бригадăсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн çине тăрса ĕçлеççĕ. Кĕрхи тырăсене агротехникă хушнă пек акса хăварнă. Хаљ колхозра кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

Григорйĕв.

Кашни трактăр пуçне 500 гектар

Тутаркасри машинă-трактăрлă станцин 19-мĕш трактăр бригади трактăрсемпе ĕçлемели çулталăк планне ытлашшипех тултарассишĕн ытти бригадăсемпе ăмăртса ĕçлет. Ку вăхăтчен бригадăри кашни трактăрпа 500 гектар сухаланă, 250 гектар çинче кĕрхи тырăсене акса хăварнă. Кусемсĕр пуçне трактăрсен вăйĕпе 97 тоннă тырă çапнă.

Хаљхи вăхăтра трактăрсемпе кĕрхи çĕртме сухине сухалаççĕ.

М. Григорйĕв.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителĕствинчи стахановла çирĕмкунлăх умĕн

Хатĕрленӳ ĕçĕ çителĕксĕр пырат̆

(Хамăр корреспондентран)

Тепĕр икĕ кунтан чукунçул строителĕствинче стахановла çирĕмкунлăх пуçланат̆.

Хаљхи вăхăтра строителĕствăна ĕçлеме килекенсен хисепĕ ӳссех пырат̆. Кашни кунах колхозсенчен йатарласа организациленĕ бригадăсем килеççĕ. Тăвай районĕнчен çент̆аберĕн 4-мĕшĕнче 3-мĕш участкăна 27 комсомолец килчĕç. Вăрнар, Çĕрпӳ районĕсенчен те ĕçлеме кашни кунах килеççĕ. Калас пулат̆, çĕнĕрен килекен рабочисем малтанхи кунсенчех ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Тăвай районĕнчен килнĕ çамрăксем малтанхи кунах хăйсене панă ĕçе тивĕçлĕн, лайăх пахалăхпа пурнăçланă.

Анчах чукунçул строителĕстви руководителĕсем чылай ĕççене йапăх йĕркеленĕ. Куљтмассăлă ĕç халĕ те йапăх. Вăл уйрăмăнах участкăсемпе околодкăсенче ĕçлекенсем хушшинче начар. Хĕрлĕ кĕтессене кирлĕ пек йĕркелесе çитермен-ха. Хаçат-журналсем, шашкă-шахмăтсем, биллиардсем сахал, музăкă инструменчĕсем чылайĕшĕ йусавлă мар.

Çент̆аберĕн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ коммунисемпе комсомолецсен пухăвĕнче куљтмассăлă ĕçе вăйлатасси çинчен уйрăмăнах хыттăн асăрхаттарса хăварчĕç, агитатăрсемпе вулавçăсем уйăрчĕç, 5 кунта пĕрре стена хаçачĕ кăларса тăма йышăнчĕç. Анчах хаçат-журналсене, хут, краскă т. ыт. йапаласене ăçтан тупмала,—никам та кун çинчен шарламарĕ.

— Епĕр канмали кунсенче кăна хаçат-журналсем вулама пултаратпăр. Ытти кунсенче пирĕн пата никам та вĕсене илсе килмест. Пирĕн патра хĕрлĕ кĕтес çук,— тет Канаш базинчи кладовойĕнче ĕçлекен Григорйĕв йулташ.

Çыхăну ĕçне те кирлĕ пек йĕркелемен. Çырусем, хаçатсем вăхăтра пымаççĕ, çухатнисем те пулкалаççĕ. Григорйĕв йулташ икĕ уйăхлăх „Красная Чувашия" хаçат çыраннă. Вăл пĕтĕмпе те (икĕ уйăх хушшинче) 3 номĕр çех илнĕ. Çывăхри почтă уйрăмĕсем строителĕствăна йĕркелĕ пулăшса пырассине пайан куна та йĕркелемен-ха.

Хар. Лисин.

Шупашкар районĕнчи колхозниксен пысăк активлăхĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)Парти Обкомĕн бӳровĕ чукунçул строителĕствинче стахановла çирĕмкунлăх ирттересси çинчен йышăннă постановленине Шупашкар районĕнчи колхозниксем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ. Йанашкассинчи çамрăксем чукунçул строителĕствинче ĕçлеме йатарласа бригадă организацилерĕç. Бригадă августăн 21-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă. Халĕ бригадă нормăна ытлашшипех тултарса пырат̆. Бригадир пулса ĕçлекен Ољгă Çеменăвă стахановла çирĕмкунлăхра пĕр кун сиктермесĕр ĕçлеме, ĕç нормине кунсерен 150—200 процент тултарма пулчĕ. Вăл хăйĕн сăмахне çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырат̆.

Опукассинчи „Красин" колхозран килнĕ 11 çынтан тăракан бригадă хăйăр турттарас ĕçре нормăна 250 процент тултарат̆. Ватă колхозниксем: Куçма Федотăв, Наталийа Зубковă çамрăксенчен йулмасăр ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 200 процент тултарса ĕçлеççĕ.

— Епĕ чукунçул строителĕствинче, ăна туса пĕтерсе хута кĕртиччченех стахановла ĕçлетĕп,—тет Федотăв йулташ.

Катĕркассинчи „Заря" колхоз членĕ стахановец Иван Оçипăв колхозра тăрăшса ĕçлекен колхозниксенчен бригадă организацилесе килнĕ. Бригадă хăйăр турттарнă çĕрте ĕçлет. Кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пырат̆. Бригадир Оçипăв нормăна 150 процент тултарат̆.

Чукунçул строителĕствинче комсомолецсен бригадисем пысăк тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Шуркаран килнĕ Иванов йулташ бригади нормăна йалан тултарат̆. Вĕсемпе пĕрле ĕçлекен ватă колхозник Васильĕв йулташ: стахановла çирĕмкунлăхра хамăрăн ĕç тухăçлăхне татах та хăпартатпăр, тет.

Ĕçлекенсем хушшинче куљтурăлă-массăлă ĕçе туса пыма парти райкомĕ аван ĕçлекен 5 агитатăра мобилизациленĕ. Халĕ вĕсем ĕçлекенсем хушшинче ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунĕсене тата тĕнчери лару-тăрусем çинчен ăнлантарса параççĕ. Ĕçлекенсене кăнна хушăра вулама районти „Ленин çулĕпе" хаçата 50 екземпљар тата „Чăваш Коммунĕ", „Красная Чувашия" хаçатсене çырăнса панă.

Л. Çеменăв.

Апелљацисене пăхса тухни тата çакна кăтартат̆. Районсенчи чылай организацисенче парти членĕсене вĕсен ĕçĕсене пăхса тухнă çĕре чĕнмесĕр, вĕсене айăплакан материалсемпе паллаштармасăр, хăйсен ĕçĕсем пирки каласа пама май памасăр партирен кăларнă. Тăшманла ĕçленĕшĕн мар, хăйсем мĕнле социаллă сийрен тухнине пытарса тăнăшăн йе партире хăйсен активлă ĕçне кăтартайманшăн партирен кăларнă йулташсене те çиййĕнчех ĕçрен кăларнă. Хăш чухне тата вĕсене хăйсене çеç мар, вĕсен тăванĕсене те вырăнтан та, хваттертен те, профсойуз членĕнчен те т. ыт. общĕствăлă организацисенчен те кăларса пĕтернĕ. Çавăн пек, 1937 çулта ПСК(б)П Çĕрпӳ райкомĕ нимĕн сăлтавсăрах ПСК(б)П членне, Шаготăв йулташа, партирен те йалхуçалăх техникум директăрĕнчен те, профсойуз членĕнчен те, хваттертен те хăваласа кăларнă. Унăн арăмне профсойуз членĕнчен, вăл йăвăр çын пулнине пăхмасăрах, вырăнтан кăларса йанă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Шаготăв йулташа вырăнтан кăларасси çинчен панă приказра ăна буржуалă-националисйатне панă. Партколлеги çак ĕçе пăхса тухса Шаготăв йулташа вырăнсăр кăларнине палăртнă, ăна партире хăвармала тунă. Çакăн хыççăн Шаготăв й-ша Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ шкулсемпе техникумсен тата аслă шкулсен пайĕн инспекторĕ туса хунă. Анчах 1938 çулти февралĕн 2-мĕшĕнче ăна тĕштырпул управленинче аслă агроном пулса ĕçлеме урăх вырăна лартаççĕ, мартăн 15-мĕшĕнче пусуçаврăнăш тăрăх ĕçлекен агроном туса хураççĕ, мартăн 27-мĕшĕнче çак вырăнтан кăларса, кайала тепĕр хут Çĕрпӳ хулине, йалхуçалăхăн опытлă станцинче ĕçлеме йараççĕ. Анчах та, ку ĕç Шаготăв йулташăн специаљнăçĕ пулман пирки, унăн тата чылай вăхăт хушши ĕççĕр çӳремеле пулнă.

Тата тепĕр, çакăнтан кайа мар киревсĕр ĕç, Йетĕрне районĕнче пулса иртнĕ. 1936 çулти августăн 26-мĕшĕнче Йетĕрне райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Лазарĕв, районри прокурор Лебĕдĕв хĕтĕртнипе, Мăн Сĕнтĕр йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Комаров йулташа вырăнтан кăлармала тăват̆. 1936 çулти нойаберĕн 10-мĕшĕнче Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком президиумĕ, çав Лебĕдĕв пĕлтерни тăрăхах, Комаров йулташа хăйĕнпе каласса пăхмасăрах суда памала тăват̆. 1937 çулти февралĕн 13-мĕшĕнче ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕ каллех, çав Лебĕдĕв материалĕсем тăрăхах, ĕçе нимĕн тĕрĕслесе пăхмасăр, Комаров йулташа хăйне чĕнмесĕр, ПСК(б)П членĕнчен кăлармала тăват̆. Райком постановленире çапла çырса хурат̆: „Комаров йулташ Мăн Сĕнтĕр йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ чухне пĕрмайах ӳсĕр çӳренĕ, йалсоветĕнче растратăсем туса пĕтернĕ. Михайлăвпа Куçмин колхозниксене хĕненĕ. Йалсовет председателĕнчен кăларнă, уголовнăй ĕççем йенĕпе ответ тыттармала тунă".

1937 çулти июлĕн 13-мĕшĕнче халăх сучĕ, Лебĕдĕв çине тăнипе, Комаров йулташа икĕ çуллăха сасă прависĕр хăварма тăват̆, çакăн хыççăн ăна тĕрмене хупса лартаççĕ. Кайарахпа çак ĕçе тĕрĕслесе пăхма пуçласан, Комаров йулташ Чăваш республикĕнчи лайăх ĕçлекен йалсовет председателĕсенчен пĕри пулни курăнат̆. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ те, РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕ те, республикăри тата ытти организацисем те пĕр хут çеç мар премиленĕ. Вăл йертсе пыракан йалсовета, малти вырăнта тăнăшăн, республикăри хисеплĕх хĕрлĕ хăми çине кĕртнĕ.

Комаров йулташ йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ чухне общĕствă пурлăхне çăратакансене колхоза сийен тăвакансене хирĕç хайаррăн кĕрешнĕ. Çавăн пек, 1934 çулта Комаров йулташ Лебĕдĕв прокурора колхозниксем килĕшмесĕр хăй ваљљи колхозран пыл тата ытти продуктăсем илсе кайма ирĕк памав; 1935 çулта Комаров йулташ Йетĕрне районĕнчи уполкомзаг урлă Лебĕдĕв пиччĕшне, Филипа, государствă умĕнчи обйазателĕствăсене йури тултармасăр тăнăшĕн 350 тенкĕ штраф тӳлеттермеле тăват̆; 1936 çулта каллех вăл Лебĕдĕвсен пĕртăванне, государствă умĕнчи парăмсене кутăнлашса тултармасăр тăнăшĕн ответ тыттармала тăват̆, „Кĕçĕн Сĕнтĕр колхоз çĕрне саккунсăр йышăнса илнĕ ĕç пирки Лебĕдĕв хута кĕнине хирĕç протес парат̆.

Комаров йулташăн çакнашкал ĕçĕсем пирки тулашса çитнĕ Лебĕдĕв пур майсемпе те ăна таварма тăрăшнă, ăна айăплама майлă сăлтав килсе тухасса кăна кĕтнĕ. Çакăн пек „сăлтав" часах килсе тухнă. 1936 çулти августăн 4-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр йалĕнче Судаковпа Куçмин тӳпелешсе кайнă, Комаров йулташ вĕсене тӳпелешме чарса, уйăрса йанă. Чăн-чăн айăплă çынсене ответ умне тăратмала тăвас вырăнне, Лебĕдĕв Комаров йулташа колхозниксене хĕненĕ тесе айăплама тытăнат̆. Вара вăл çак ĕç пирки пĕр çулталăк хушши хăй следстви тăват̆, Комаров йулташа йалсовет укçи-тенкине салатса пĕтернĕ, ӳсĕр çӳрет тесе айăплама тăват̆. Тĕрĕслесен, çак фактсем пĕри те тĕрĕс марри палăрнă. Чăваш АССР Верховнăй Суд президиумĕ Комаров йулташ жалăбине пăхса тухса, суд решенине пăрахăçа кăларнă, айăплама сăлтав çук пирки ĕçе пĕтерсе лартмала тунă. Партколлеги Комаров йулташа парти членĕнче хăвармала тунă. Йетĕрне районĕнчи прокурор пулнă Лебĕдĕва партирен кăлармала тунă. Лебĕдĕв Комаров йулташ çинчен елек сарнисĕр пуçне тата вăл хăй тăшманла елементсемпе çыхăнса кайнă, ĕçре револљуцилĕ саккунлăха пăсакансене хӳтĕлекен çын пулнă. Комаров йулташ ĕçĕ жуликсем, политикă йенчен шанчăксăр çынсем хăйсен интересĕсемшĕн ĕçе тĕрĕслемесĕр ĕненекен çынсемпе йепле чейелĕн усă курнине питĕ лайăх кăтартса парат̆.

1937 çулта Ошосçдор çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци, парторг Васильĕв тĕрĕсленĕ материалсем тăрăх, çулйĕр експлоатаци участкин начаљникне, Рунгш йулташа, жуликла хăтланса ĕççене йапăхтарса йанă, çавăн пирки те предприйати 70 пин тенкĕ тăкак тӳснĕ тесе айăпласа ăна партирен те ĕçрен те кăларса суда памала тунă. ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ Рунгш йулташа мĕнле сăлтавсемпе кăларса йаннине тĕрĕслесе пăхмасăр тата следстви мĕнпе пĕтессе кĕтсе тăмасăр, çав сăлтавсемпех партирен кăларса йанă. Тĕрĕсленĕ хыççăн çакă палăрнă: Рунгш йулташ ĕçлекен участкă производствă программине 109 процент тултарнă, жуликла ĕççем пулман, предприйати нимĕнле тăкак та курман. Айăплама сăлтавсем çук пирки уголовнăй ĕçе чарса лартнă. Партколлеги Рунгш йулташа парти йенĕпе нимĕнле айăп хумасăрах партире хăвармала тунă. Рунгш йулташа тĕрĕс мар айăпласа партирен кăлармала тунăшăн Васильĕв парторга выгăвăр памала тунă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ кăтартнă пек ĕçлесе чылай парторганизацисем коммунистсен кунçулĕ çинчен тăракан ыйту çине тĕплĕнтерех, йулташла тăрăшса пăхма пуçланă. Анчах та калас пулат̆, чылай парторганизацисем çаплах хăйсем тунă йăнăшсене вĕçне çитиччченех тӳрлетсе çитереймен, партин политикăлă ĕççене ПСК(б)П Тĕпком пленумĕ хушнă пек çĕнетсе çитереймен. Хăшпĕр райкомсемпе пуçламĕш парторганизаци руководителĕсем çак ĕçе черетлĕ кампани ĕçĕ вырăнне хурса, йачĕшĕн кăнатуса пыраççĕ, партилĕ-политикăлă ĕççене вăйлатасси çине кирлĕ таран çаврăнса пăхмаççĕ. Çакăнтан вара иртнĕ çулсенче тунă йăнăшсене тепĕр хут тăвасси патне пырса тухаççĕ. Тĕслĕхрен çакăн пек пример илме пулат̆. 1938 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче ПСК(б)П Улатăр райкомĕ ПСК(б)П членне Гаљкин йулташа — Улатăр станцин аслă кондуктăрне—мораљ тĕлĕшĕнчен пăсăлнă, коммунис сăн-сăпатне çухатнă, халăх тăшманĕсене пулăшакан çын тесе партирен кăларнă. ПСК(б)П Обкомĕ çак ĕçе пăхса тухнă чухне акă мĕн палăртнă: Гаљкин йулташ стахановец, ăна темиçе хутчен те премиленĕ, ĕçе лайăх та тĕплĕн тунăшăн чукунçул рабочисен значокне панă. ПСК(б)П Обкомĕ Гаљкин йулташа парти членĕнче хăвармала турĕ.

Йулашки вăхăтра партколлеги райкомсем 1938 çулта партирен кăларнисен ĕçĕсене пăхса тухрĕ. Партирен кăларнă 20 çынран 10-шне, партирен тĕрĕс мар кăларнă тесе, партире хăвармала тунă. Çакă вăл хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче, ПСК(б)П райкомĕсенче çаплах коммунисене айăплакан фактсене нимĕн тĕрĕслемесĕр тумасăр партирен кăларас йĕрке пĕтменни çинчен калат̆. Çавăн пек руководителĕсене парти йенĕпе ответ тыттармала, йертсе пыракан вырăнсенчен кăлармала.

Елекçĕсене, карйериссене, перестраховщиксене тăрă шыв çине кăларса, йутă тата тăшманла елементсене партирен хăваласа кăларса пынипе пĕрлех, парти организацисен ăнсăртран, пĕлмесĕр йăнăш тунă, хăйсен йăнăшĕсене практикăлă ĕçре тӳрлетме пултаракан парти членĕсен кунçулĕ çине лайăхрах пăхмала тăвас пулат̆. Çакăн пек йулташсене пирĕн партирен кăлармала мар, вĕсене пур майсемпе те йусама пулăшмала.

Вырăнсăр партирен кăларнă парти членĕсене тепĕр хут партине илмеле тунă чухне, парти организацисенчен чылайĕше елекçĕсене, карйериссене, перестраховщиксене нимĕн айăпламасăрах хăвараççĕ. Хăшпĕр уйрăм руководителĕсем партирен кăларнă чухне хăйсем тунă йăнăшсене сăмахпа йышăнаççĕ, анчах çак ĕççемшĕн айăплисене ответ тыттарас, хăйсен йăнăшĕсене тӳрлетес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн пленумĕ партирен тĕрĕс мар кăларнисем çинчен пичет урлă тĕрĕсе кăлармала тăвас, вĕсене парти ĕçне хутшăнтармала тăвас йенĕпе кăтартса панисене пурнăçа кĕртесси чылай районсенче тата Шупашкар хулинче те, ку таранччченех çителĕксĕр пырат̆. Кунсăр пуçне тата партирен кăларнисене çаплах ĕç памасăр тăни çинчен калакан фактсем те сахал мар. Хăшпĕр руководителĕсем, хăйсене хăйсем вăралавас мар тесе, партирен кăларнисене ĕçе илмеççĕ, нимĕнле сăлтавсăрах вĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçараççĕ. Çакнашкал руководителĕсене халех йĕркене кĕртес пулат̆. Çакнашкал хăтланни вăл—хăшпĕр руководителĕсем ПСК(б)П Тĕпком пленумĕн решенисене пурнăçа кĕртесшĕн мар пулни çинчен калат̆.

Парти организацисен ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пырса коммунистсене партирен кăларнă чухне тунă хăйсен йăнăшсене вĕçне çитиччченех тӳрлетмеле, парти членĕсем çине чунсăр пăхас йĕркене йалан-лăхах пĕтермеле, пурин çине те пĕр виçепе пăхас йĕркене тĕп тумала. Коммунистсен револљуцилĕ сыхăлăхне тата çӳлерех хăпартар, тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерер, партин ирĕклĕ йе ирĕксĕр тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпе тăпăлтарса кăларар.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Йапонецсем Йанцзы йуханшывĕн тӳремĕнче пысăк сиен тӳснĕ хыççăн, Йапони командованийĕ фронтăн çав участкине çĕнĕ вăйсем илсе пынă.

Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ çинче халĕ Йапонин тăватă дивизи тăраççĕ. Йапонецсем виçĕ колоннăпа наступлени пуçласа йанă. Пĕрремĕш колоннă Жуйчанран хĕвеланăçнеле, иккĕмĕш колонна—çурçĕреле, Матоучжаӈ çине тата виççĕмĕш колоннă—кăнтăрала Деаӈ хули çине наступлени тăваççĕ. Йапонин малтанхи икĕ колонни малала куçайман. Жуйчанпа Деаӈ хушшинчи çул çинче икĕ полкран тăракан Йапони колонни çентаберĕн 2-мĕшĕнче Мяӈшане çитнĕ.

Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр çыранĕнче, кăнтăр çыранĕнчи пекех, Йапонин тăватă дивизийĕ çапăçаççĕ. Йапонецсем хăйсен вăйĕсене Хуанмейе, Лучжоу районне (Чахоу кӳллинчен çурçĕреле) тата Лjуане (Лучжоуран хĕвеланăçнеле) илсе пынă, çав вырăнсенчен вĕсем хĕвеланăçнеле наступлени тăваççĕ. Ерне хушши вăйлă атакăсем тунă хыççăн Йапони çарĕсем Хуанмейрен хĕвеланăçнеле наступленине куçма пултарайман.

Çурçĕр Китайра, йапонецсем Хенаӈ провинцин çурçĕрти пайĕнче тунă „правителствăн" çар чăçĕсенче пин ытла Китай салтакĕсем Йапонин 60 офицерне вĕлерсе Китай правителстви йенне куçнă. Хенаӈ провинцин çурçĕр пайĕнче Йапони подкреплениĕсем пынă хыççăн, Цзийуане тата Цинйане (Кайфынран хĕвеланăçнеле) йапонецсем каллех хăйсен аллине илнĕ.

* * *

Йулашки икĕ кун хушшинче Йапони авиацийĕ Китай хулисем çине татах та темиçе хут тапăннă. Çентаберĕн 3-мĕшĕнче йапонецсем Наӈчан хули çине нумай бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнă мирлĕ граждăнсен хисепĕ 100 çынран иртет, 50 çурт ишĕлнĕ. Çав кунах Йапони самоӆочĕсем Йунçу хули çине (Наӈчан хулинчен çурçĕреле) икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем 80 çынна çитеççĕ. Çентаберĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче Йапони самоӆочĕсем Кантон—Хаӈкоу чукунçулĕ çине кашни кун икĕ хут бомбăсем пăрахнă. Йапонин 12 самоӆочĕ Учан хули çине 21 бомбă пăрахнă.

(ТАСС).

Йапони тылĕнче

Америкăри „Ӈйу-Йорк Таймс" йатлă пысăк хаçатăн корреспонденчĕ хăйĕн пичетленсе тухнă статйинче çапла çырат: çак çулти август уйăхĕн варринче Йапонине кайса килсен, епĕ унта çакна курса ĕнентĕм: Йапонире пурăнакан халăхсем Китайри фронтсенчи чăнчăн лару-тăру çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ. Йапонире вăрçă ĕçĕсем çинчен сӳтсе-йавма чарнă. Йапонецсен ытларахăш пайĕ, вĕсем хыççăн йерлессинчен сыхланса, Йапонине килекен йут çĕршыв çыннисене Китайра вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен ыйтусем пама хăраççĕ.

Йапонири ĕççыннисене тĕрлĕ налогсемпе путарса лартнă, вĕсем кулленех кирлĕ йапаласен хакĕсем пысăккăн ӳсниде хыттăн аптăраççĕ. Хресченсем хăйсен çара кайнă ывăлĕсем çинчен темиçе уйăх хушши нимĕнле хыпар та илеймеççĕ.

(ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Çентаберĕн 5-мĕшĕнче Судет-Нимĕç партине йертсе пыракансен ларăвĕнче Генлейн Гитлерпа курса калаçнин резуӆтачĕсем çинчен пĕлтернĕ. Генлейн доклачĕ хыççăн Судет-Нимĕç партин руководителĕсем резоӆуци йышăннă, вăл резоӆуцире Чехословаки правителствине генлейнăвĕцсен пур требованисене те пурнăçа кĕртме ыйтнă. Çак резоӆуци хĕснипе тата Англи представителĕн Ренсименăн „сĕнĕвĕ" тăрăх Чехословаки правителстви татах уступкăсем тума йышăннă. Çав кунах Чехословаки правителстви Чехословакин нации ыйтăвне татса памали çĕнĕ пройект туса каларнă, унăн текстне хаӆ пичетлесе кăларман-ха.

Англи пичечĕ çакна палăртат: Чехословакири лару-тăру лайăхланмарĕ, унта кризис калама çук вăйланса пырат. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генлейнăвĕцсем Чехословакин Судет облăçне, сак кунсене хирĕç кайсах, пĕтĕм республикăран уйăрса илсе хăйне уйрăм облăç тума хăтланаççĕ, унта халĕ „министĕрствăсем" туса хунă та ĕнтĕ, кунсăр пуçне Германири йеверлĕ хăйсен полицине тунă.

Прагăран фашисăма хирĕç кĕрешекан йухăм ӳсни çинчен пĕлтереççĕ. Çентаберĕн 4-мĕшĕнче Чехословакири хуласенче фашисăма хирĕçле нумай çынлă демонстрацисем пулса иртнĕ. Халăх массисем правителствă урса кайнă генлейнăвĕцсем умĕнче уступкăсем тунине хирĕç тухса калана. Вĕсем фашисла захватчиксене хирĕç кĕрешме хатĕр тăнине палăртнă. Судет облăçĕнчи чылай вырăнсенче пулса иртнĕ демонстрацисем чехсемпе фашисăма хирĕç кĕрешекен нимĕçсем пĕр-пĕринпе пĕрлĕхлĕ пулнипе паларса тăраççĕ, вĕсем Чехословакин никама пăхăнманлăхĕшĕн тата унăн территорисене пĕтĕмĕшпех хӳтлессишĕн кĕрешме ыйтнă.

(ТАСС.)

Германире вăрçа хирĕçле шухăш ӳсет

Германире вăрçа хирĕçле шухăшсем вăйлансах пыраççĕ. Англири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕнчи нумайĕш генералсем те вăрçă авантюрине хирĕç тăраççĕ. Германири мĕн пур халăх уççăнах вăрçа хирĕç тăрат. Нимĕн иккĕленмели те çук,—тесе çырат Англири „Обсервер" хаçат,—вăрçă çĕршывра фашисăма хирĕç тăракан вăйсене сарăлса кайма тата вĕсене хăйсен ĕçне вăйлатма майсем парĕ.

„Сендей Таймс" хаçат корреспонденчĕ те çапла çырат: Германи халăхĕ вăрçăран хăрат, мĕншĕн тесен вăл йулашки йунлă вăрçăн тискерлĕхĕсене астăват. Чехословаки Германине хăратат, тесе калайнине çĕршывра никам та ĕненмест.

(ТАСС).

Германире загăвăр тупса палăртнă

Поӆшă пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин авиаци министерствинче гитлĕрла йĕркене сирпĕтсе antaрас задачă лартнă çынсен ушкăнне тупса палăртнă. Çак ушкăн пуçĕнче паллă çар специалисĕ барон фон—Форстнер тăнă, ăна халĕ çар судне панă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Центрти фронтра Мадрид çывăхĕнче çентаберĕн 3-мĕшĕнче республиканĕцсем мина сиктерсе йанă, мина siksе çурăлса кайни пăлхавçăсен малти позицисене пит пысăк сиен кӳнĕ. Пăлхавçăсен çав позицисенчен пăрахса кайма тивнĕ, вĕсен салтаксем нумай вилнĕ. Мадридран çурçĕр-хĕвеланăç йенчеле çентаберĕн 2-мĕшĕнче республиканĕцсем Лос-Росас-еӆ Ескориал çулĕ патĕнче питех те кирлĕ позицисене тытса илнĕ.

Фронтăн Естремадурă участкинче республиканĕцсем темиçе высотана йышăннă, Республикă авиацийĕ кунта Италин пилĕк самоӆотне персе антарнă.

Хĕвелтухăçри фронтра Гандесă районĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем республиканĕцсен позицийĕсем çине хыттăн атакăланă, вĕсем пысăк çухатусем туса виçĕ высотана тытса илнĕ. Çав районри ытти участкăсенче фашиссен атакисене сирсе йанă. Çентаберĕн 2-мĕшĕнче республиканĕцсем Бот районĕнче, Гандесăран кăнтăр йенче, пăлхавçăсен пĕр çĕреле пуçтарăнса пыракан çарĕсем çине анăçлăн бомбăсем пăрахнă.

Çавăн пекех республиканĕцсен авиацийĕ Лерида районĕнче пăлхавçăсен траншейĕсем çине тата çарсем илсе кайакан грузовиксем çине бомбăсем пăрахнă.

★

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра Ебро йуханшывĕн районĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем, хăйсен вăйĕсене çĕнĕрен пăхса тухса кирлĕ пек вырнаçтарнă хыççăн тата ĕçе пысăк резервсем кĕртнĕ хыççăн, республиканĕцсен позицийĕсене вăйлăн атакăлаççĕ. Республиканĕцсем хăйсен кашни пĕр татăк çĕрне паттăрăн хӳтлесе тăраççĕ. Питĕ пысăк çухатусем тунипе çеç çентаберĕн 5-мĕшĕнче фашиссем Гандесă районĕнчи 4 высотана илме пултарнă. Çав кунсенче республиканĕцсем палхавçăсен тăватă танкне стройран кăларнă тата фашиссен вуникĕ самоӆотне персе антарнă. Италин пĕр самоӆочĕ республиканĕцсене хăй ирĕккĕнех парăннă.

Левант фронтĕнче республиканĕцсен Еӆ Торо районĕнчи позицийĕсене çĕнтерсе илме хăтланни ахалех пулнă.

Центрти фронтăн Естремадурă участкинче республиканĕцсем Ваӆдекабаӆйеро районĕнче (Пуебло де Аӆкосертен çурçĕреле) фашиссене хăваласа йанă.

* * *

Çентаберĕн 5-мĕшĕнче фашиссен 5 самоӆочĕ Каталони чикки урлă вĕçсе каçса, Франци территорийĕ çине кĕнĕ. Кунта вĕсем çине Францири зенитлă батарейĕсенчен пенĕ хыççăн, самоӆотсем, Каталонин тинĕс хĕрринчи темиçе йалĕ çине бомбасем пăрахса, кайала вĕçсе тарнă.

(ТАСС).

Францири забастовкă

Амйен хули (Сомма депертаменчĕ) таврашĕнчи нумай пир-авăр предприйатисенчи 14 пин рабочи забастовкă тума пуçланă. Забастовкă—предприйатисен хуçисем рабочисен ĕçукçине 15—20 процент чакарма хăтланнăран пуçланнă. Забастовкă тăвакан рабочисем хапрăк çурчĕсене йышăннă. Рабочисем хапрăк çурчĕсенчен тухса каймасăр хапрăк хуçисем вĕсемпе калаçма килĕшмеççĕ.

(ТАСС).

И. УШАКОВ РЕКОРЧĔ

Çак кунсенче Воронеж хулинче, чукунçул тата метро строителствичи работниксен профсойузĕн „Стрела" йатлă спорт обществин çăмал атӆотикăпа Пĕтĕм Сойузри ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ.

Ăмăртăва Совет Сойузĕн тĕрлĕ хулисенчен пурĕ 120 çын хутшăннă. Хусан чукунçулĕ çинчен ăмăртăва 8 çын кайнă, вĕсенчен 6 çын Канаш станцинчен. Вĕсем хушшинче: И. Ушаков, Й. Йефремăв, Присоткăвăсем (аппăшĕпе йăмăкĕ) тата ыт. те.

Канаш — Шупашкар чукунçул строителствинче ĕçлекен маçтăр ывăлĕ И. Ушаков „Стрела" обществă йенĕпе Пĕтĕм Сойузĕпе çĕнĕ рекорд тунă. Вăл гранатăна 75 метр та 1 сантиметр хушăна ывăтнă.

Ушакова йат çырнă хаклă приз тата грамăтă парса премиленĕ.

Медицинăра сайра хутра çеç пулакан йапала

СТАЛИНО. Днепропетровскри чĕлхесĕр-хăлхасăрсен çуртĕнче пурăннă Щ. хушаматлă пĕр хĕрарăм август уйăхĕн малтанхи кунĕсенче Славйанскри курорта ура ревматисăмне тӳрлетме пынă. Ача чухне вăл скарлатинăпа чирленĕ пулнă. Çав чир ăна чĕлхесĕр-хăлхасăр туса хăварнă.

Курортра 20 кун хушши пурăннă хыççăн хăлхасăр-чĕлхесĕр хĕрарăм кĕтмен çĕртенех калаçма пуçланă. Калаçма пуçланипе пĕрлех вăл илтме те пуçланă. Малтанхи вăхăтсенче хĕрарăм сасса çывăхран çеç илтнĕ, анчах та темиçе кунтан вăл айакран питĕ хуллен калаçнă сăмахсене те илтме тытăннă.

Çак медицинăра сайра хутра çеç пулакан йапала врачсен наукă секцине тĕлĕнтерсе йанă. Çав чĕлхесĕр-хăлхасăр пулнă хĕрарăм пурăннă условисене тĕплĕн тĕпчесе пĕлес, шутпа, çавăн пекех тата унăн чир историне вĕренсе пĕлме, секци Днепропетровск хулине икĕ врач йанă.

ССРС наукисен Академинче

ССР Сойузĕнчи наукăсен Академи президиумĕн ларăвĕнче вырăссен аслă поечĕ М. Ю. Лермăнтăв çуралнăранпа 1939 çулти октаберĕн 15-мĕшĕнче 125 çул тултарнине чысламали программăна пăхса тухнă.

Президиум ларăвĕ Мускав хулинче „М. Ю. Лермăнтăвăн пурнăçĕпе ĕçĕсем" йатлă Пĕтĕм Сойузри выстăвкă организацилеме йышăннă. Вăл выстăвкăра ССР Сойузĕн мĕн пур пек хранилишчăсенче усранакан документсем, художествăлă тата иӆӆустрацилĕ материалсем пулмалла. Лермăнтăва хисеплесе тунă пур памйетниксене те реставраци тумала, çавăн пекех поетăн пурнăçĕпе çыхăнса тăракан çуртсене тата чылай ссоруженисене те реставраци тăваççĕ.

Наукăсен Академийĕ Лермăнтăвăн мĕн пур произведенийĕсене пичетлесе кăларма шутлат, массăлă вулакан ваӆӆч суйласа илнĕ сочиненисен кĕнеки тухмала. Йубилей кунĕсенче чаплă ларусем пулса иртеççĕ.

Авиамоделиссен Пĕтĕм Сойузри рекорчĕсем

Косăрĕв йачĕпе тăракан ССРС Тĕп аероклубăн авиаципе спорт комиççин президиумĕ авиамоделиссен Коктебĕлре 1938 çулта пулнă Пĕтĕм Сойузри слӆотĕнче вĕçнĕ авиамоделсен рекорчĕсем çинчен материалсем пăхса тухнă.

Комиççи тăватă авиамодел Пĕтĕм Сойузри çĕнĕ рекордсем тунине çирĕплетнĕ.

Николай Трунченков конструкципе тунă, резинă моторпа ĕçлекен гидросамоӆот моделĕ 482 метр вĕçнĕ. Комиççи çакна резинă моторпа ĕçлекен гидросамоӆот моделĕсен категорийĕшĕн тӳрĕ линипе инçете вĕçессипе Пĕтĕм Сойузри рекорд туса çирĕплетнĕ.

Александр Бондаренко конструкципе тунă, резинă моторлă самоӆот моделĕ пĕр çекундăра 19,2 метр хăвăртлăхпа вĕçнĕ. Çак резуӆтата резинă моторлă самоӆот моделĕсен категорийĕшĕн хăвăрт вĕçессипе Пĕтĕм Сойузри рекорд туса çирĕплетнĕ.

Сергей Малик конструкципе тунă, бензинпа ĕçлекен моторлă самоӆот моделĕ 1 сехет те 13 минут хушши вĕçнĕ. Модел çакăн чухлĕ вăхăт вĕçнине бензинпа ĕçлекен моторлă авиамодел категорийĕшĕн Пĕтĕм Сойузри рекорд тунă.

Иван Каширин конструкципе тунă планĕр моделĕ вĕçнĕ резуӆтата, планĕр моделĕсен категорийĕшĕн, тӳрĕ линипе инçене вĕçессипе Пĕтĕм Сойузри рекорд шутне кĕрсе çирĕплетнĕ. Иван Каширин моделĕ 11.118 метр вĕçнĕ.

Çав тăватă вĕçев çинчен материалсене пĕтĕм тĕнчери рекордсем пек çирĕплетме Пĕтĕм тĕнчери Авиаци Федерацийĕн (ФАИ) президиумне йараççĕ.

(ТАСС).

Маçтерскойри хуçасăрлăх

Кайри Шĕнерпуçĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р) сĕтел-пукансем тăвакан маçтерской ваӆӆи иртнĕ çултах двигăтĕл илсе килнĕччĕ. Анчах двигăтĕле пайан кун та вырнаçтарса лартман, фундамĕнт хумали вырăна çеç чавнă. Çавна пула маçтерскойсенче механисăмсемпе ĕçлесси тытăнса тăрат.

П.

Çичĕ республикă спартакиади

Çентаберĕн 4-мĕшĕнче Хусанта çичĕ нацилĕ республикăсен Тутар, Башкир, Чăваш, Удмурт, Коми, Мари тата Мордва АСС Республикĕсенчи физкуӆтурниксен спартакиади пуçланнă.

Чи малтан ăмăрту „Динамо" стадионĕнче çăмăл атлетикăпа пулса иртнĕ. Ку ăмăртура пĕрремĕш вырăна Тутар республикĕ тухнă. Унăн 234 очко пулнă. Чăваш республикĕ 3-мĕш вырăна йышăннă (137 очко).

Казанкă йуханшывĕ çинчи „Динамо" шыв станцинче шывра ишессипе ăмăртусем пулса иртнĕ. Ку ăмăртура Чăваш республикĕнчен кайнă ишекенсем хăйсен ăсталăхне лайăх кăтартнă. Хĕрарăмсенчен 100 метр хушăна месерле ишмели ăмăртура Николайĕвă йулташ пĕрремĕш вырăн йышăннă, вăл 1 минут та 53 çекундăра ишсе тухнă. Алла гранатă тытса 50 метр хушши ишмели ăмăртура Иванов йулташ малти вырана тухнă, вăл 46,5 çекундăра ишсе тухнă. Çапла вара Чăваш республикĕн ишекенĕсем шывра ишессипе пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Веслапа ишессинче пĕрремĕш вырăна Коми республикĕ йышăннă. Чăваш республикĕ пиллĕкĕмĕш вырăнта.

Осоавиахим организацийĕ

Çентаберĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарти строителствăра, Молăстăв йулташ пуçарнипе, Осоавиахим организацийĕ турĕç. Членсем çар ĕçне вĕренме пуçларĕç.

В. Димитрийĕв.

Пулни-иртнисем

ЧĂРСĂР ШОФĔР. Çентаберĕн 2-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи коммуналлă хуçалăх шоферĕ А. М. Черйапин машинăпа çӳрес йĕркене пăсса, грузовикпе урам тăрăх пысăк хăвăртлăхпа пынă. Хăвăрт кайакан грузовик çинчен резинă савăтĕнчи рабочи С. А. Макаричев йулташ ӳксе вилнĕ. Ĕçе тĕрĕслеççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

391 гектар çинчи сат

Шупашкар хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнеле Чебоксаркă йуханшывĕн икĕ йеннипе, тăвалла, 4 километр тăршшĕ, пысăк та илемлĕ сат сарăлса выртат. Ку сата кăнтăр-хĕвеланăç йенчен йумавлăх хӳтлесе тăрат. Вăл çак сата татах та пысăк сăнлăх парат.

Чебоксаркăн икĕ йенĕпе тайлăмлă вырăн. Кăнтăр йенчен çурçĕреле, çурçĕр йенчен кăнтăрала пăхсан çамрăк та йаштакă улмуççисен речĕсем йарăмăн-йарăмăн тăсăлса выртаççĕ. Улмуççисем хушшинчи çамрăк хăвалăх пек хура çырла тĕмисем йăваш çилпе тинĕс пек лăпкăн хумханаççĕ.

Сата мĕн чухлĕ шăларах кĕрен—куç умне çавăн чухлĕ илĕртекен сăнсем тухса тăраççĕ.

Ку вăл РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сат-пахча çимĕç Управленин Шупашкарти 16-мĕш номĕрлĕ совхоз сачĕ. Вăл пĕтĕмпе 391 гектар çĕр йышанат. Ача, 74 гектарне 1930 çулта, ытти 317 гектарне 1931—32 çулсенче лартнă. Карачура вăрманĕн уçланкинчи 74 гектар çинчи сат кăçал çимĕç пама пуçланă. Тавралăх илем те ырă шăршă. Таçта шалта хвасла йурă илтĕнет. Кăна совхоз рабочийĕсем—хĕрсем, каччăсем йураççĕ. Вĕсем йăваç çинчен пĕрхĕнсе тухас пек тулли-чăмăр панулмисене çемçен тытса татаççĕ те йешчĕксем çине хураççĕ.

— Ку вăл ĕмĕтен пуçамĕшĕ çеçха. Ку çимĕççсем çитес çул татах нумай пуласса шанмала,—тет 2-мĕш участкăри бригадир Малов йулташ.—Кăçал пирĕн ку йăвăççенчен çимĕç илмеле те марччĕ. Хăйсем сĕнсех параççĕ те, илес терĕмĕр.

Ку сат чăнах та пысăк шанчăк парат, савăнтарат. Унтан кăçал 35 тоннă çимĕç илеççĕ. Вăл тепĕр ик-виçĕ çултан çимĕçсен айне туса лартĕ. Анчах савăнмалипе пĕрлех кӳренмелисем те нумай. Чебоксарка йуханшывĕн çурçĕр йенче сăрт çамкине 64 гектар çине хура çырла йăвăççисем лартнă. Ку вырăнта хура çырла пулма нимĕнле услови те çук. Çитменнине тата вăрманта хăй тĕллĕн ӳсекенскерне лартса тултарнă. Çавнашкалах 2-мĕш участкăри 1-мĕш уйри улмуççисем хушшипе лартнă хура çырла йăвăççисем те 75 процентне вăрманта ӳсекенскерсем. Сата лартнă чухне çилтен хӳтлеме йăвăççем лартса хăварман. Çак майпа сатри йăвăççем 8 процент пăсăлнă. Сат тавраше 6 километр. Çилтен хӳтлемели йăвăççене 3,5 километр тăршшĕне кăçал çеç, ăна та çур метрлă йăвăççемпе кăна лартса тухнă. Пĕтĕм сата çилтен хӳтлеме 57 пин йăвăç лартмала. Халĕ çилтен хӳтлеме йăвăççем лартас пулсан çил ĕçтан, ăçта, мĕнле вĕрнине шута илсе, сата йусамала. Çак майпа лартнă вырăнтан 1.800 йăвăç та тепĕр çĕре куçарса лартма тивет. Сата тата тепĕр пысăк хăрушлăх хăрат. Вăл—сатра шăшисем калама çук йышлăн хунаса кайни. Сатра çĕр çинче ура пусма та вырăн тупаймастăн, шăши шăтăкĕ çеç. Ку вăл сатра клевĕр екнинчен килнĕ пулмала. Халĕ вăл шăшисене мышйаклă йӳçĕ натри çăкăрпа хӳтăштарса парса пĕтерме тытăннă. Ку ĕçпе расхут нумай тухат. Шăшисем иртнĕ хĕлле те чылай йăвăççене кăшланă. Кăçал вĕсене пĕтерме елкĕреймесен, пĕтĕм сата шăшисем сиен тăвасси куç умĕнчех. Çак хăрушлăхсене курсан, халăх тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсем палăраççĕ. Ку сатăрлă ĕçе совхозăн малтанхи руководстви (Крысин) туса хăварнă.

Кунта тата çакна асăнса хăвармала. Совхозра рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăрту çук. Ĕçре стахановла метăдпа усă курмаççĕ.

Совхоз кăçал чылай çимĕççем, çырласем туса илнĕ: хура çырла 37 гектар çинчен (сатăрласа лартнă 64 гектар çинче çырла илеймен) 22.866 килограм, çĕр çырли (виктори) 4 гектар çинчен 16 479 килограм, хăмла çырли 20 гектар çинчен 17.772 килограм, помидор 1,5 гектар çинчен 15 тоннă, хăйар 2,8 гектар çинчен 40 тоннă, хăвăл сухан 0.3 гектар çинчен 10 тоннă туса илнĕ. Ку çимĕççемпе çырласене сутма Чебторга панă. Кусемсĕр пуçне 3 гектар çинче купăста, 1,5 гектар çинче кишĕр, 2,5 гектар çинче сухан пур. Совхоз çумĕнче питомник пур. Питомникре 1,9 гектар çинче 19 пин икĕ çулхи сыпнă улмуççисем пур. Вĕсене çентаберĕн йулашки кунĕсенче колхозсене сутма тытăнаççĕ. 1,2 гектар çинче 19 пин пĕр çулхи сыпнă йăвăççем, 1,4 гектар çинче сыпмалисем 54 пин йăвăç, 3,5 гектар çинче 86 пин кăçал сыпнă йăвăç пур. Кусемсĕр пуçне кăçал 3 гектар çине 278 пин вăрă лартса хăварнă. Кунтах, икĕ гектар çинче, улмуççисене сыпма туратсем касса илмели йăвăççем пур.

Пирĕн ирĕклĕ те телейлĕ çĕршывра ĕççыннисем пуйан та куӆтуралă пурăнма пуçларĕç. Вĕсем тата куӆтуралăрах пурăнасшăн, лайăхрах, тутлăрах çийесшĕн. Шупашкарти совхозăн хăйĕн сатĕнче малтанхи руководстăн сатăрлăх йулашкийĕсене пĕтерсе, ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йарса, ĕççыннисене тутлă çимĕççем памала.

Петр Тороней.

„ЧĂВАШВĂРМАНПРОМĂН"
УЛАТĂРТИ АВТОШКУЛĔ
предприйатисене тата колхозсене ваӆӆи шоферсем вĕрентме
тӳлевлĕ курса илесси çинчен пĕлтерет
Вĕренмели срук 5 уйăх. Вĕреннĕшĕн 1.200 тенкĕ тӳлемеле.
Сывлăх йенчен шоферта ĕçлеме йурăхлисене, 18 çулхисене тата аслăраххисене курса илеççĕ. Пĕлӳ тĕлĕшĕнчен пуçламĕш шкулта 4 çултан кайа мар вĕренни кирлĕ.
ÇАК ДОКУМЕНТСЕНЕ ТĂРАТМАЛА:
1. Зайавлени,
2. Колхозран йе йалсоветĕнчен илнĕ характеристикă,
3. Миçе çул вĕренни çинчен справкă,
4. Паспăрт (пĕрле илсе пымала),
5. Вĕрентнĕшĕн тӳлеме пулнă обйазателствă.
Курса вĕренме кĕрес текенсен кăçалхи çентаберĕн 15-мĕшĕ тĕлне Улатăра испытани тытма пымала.
АДРĔС: г. Алатырь, территория быв. л.-завода, 9—10.
2—2

Шупашкар хула совечĕн пурăнмали çуртйĕр управленийĕ Шупашкар хулинчи ĕççыннисене пĕлсе тăма çакна пĕлтерет:
Пурăнмали çуртйĕр управленине хулари ĕççыннисен харпăрхăй пурăнакан çуртйĕрсене капитаӆнăй ремонт тума 25.000 тенкĕ укçа уйăрса панă.
Çуртйĕрсене йусас текенсен Хула Совечĕн пурăнмали çуртйĕр управленине заявлени çырса памала. Ыйтмалисем пулсан, çавăнтах ыйтса пĕлмеле.
Шупашкар Хула Совечĕн пурăнмали çуртйĕр управленийĕ.

1938 ÇУЛХИ
Çентаберĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа
ШУПАШКАРТИ
калаçакан кино-театрта
Чехăв произведенийĕ тăрăх ӳкернĕ
çĕнĕ, саслă, илемлĕ фиӆм
„МЕДВЕДЬ"
КИНО-КОМЕДИ
кăтартаççĕ
Унсăр пуçне тата „Сойузкинохроникăн" 37, 38-мĕш номĕрлĕ кино журналĕсем пураççĕ.
СЕАНССЕМ: 6, 8, 10 сехетсенче кăçхине пуçланаççĕ.
Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă
Дирекци.

ЧЕБТОРГĂН
1-мĕш №-лĕ СТОЛОВĂЙĔ
(ГОСТИНИЦĂРА)
ремонт туса пĕтерне хыççăн, çентаберĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа
ĔÇЛЕМЕ ТЫТĂНЧĔ
Унта: вĕри тата сивĕннĕ апатсем, пеӆменсемпе кукăӆсем, сăра, шăрăхран ĕçсе уçăлмали шывсемпе квассем, наливкăсемпе ерехсем пур.
Столовăй ирхине 8 сехетрен пуçласа 1 сехет çĕрлеччен ĕçлет. Перерыв 6 сехетрен пуçласа 7 сехете çити.
Чебторгăн пĕрлешӳлĕ апатлану пайĕ.

Ертел членĕсен пухăвĕ йышăннă тăрăх, Шупашкарти кооперативлă транспăртлă „ВОЛГАРЬ" ертел
пĕтет
Организацисемпе уйрăм çынсем икĕ ерне иртиччен претензисем пама пултараççĕ. Çак срук иртнĕ хыççăн претензисем йышăнмаççĕ.
Ликвидком.

Инженерпа арăмне
ПУРĂНМА ПӲЛĔМ КИРЛĔ
Пӳлĕм пурри çинчен çак адреспе пĕлтермеле: Гидроузел, Ефросинину П. А., тел 2—14.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подписнăя сыхăну уйрăмĕсем, письмоносцсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 471 Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, ф. б. 58×94 п. л.